4174
41-110



# В. И. ЛЕНИН

# ВЫРĂС СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧĔСЕН ЗАДАЧИСЕМ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР • 1941

*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

В. И. ЛЕНИН

# ВЫРӐС СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧӖСЕН ЗАДАЧИСЕМ

Чувашская книжная палата г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

Перевод Н. Колюшкина Редактор перевода Н. Меценатов

Подписано к печати 5/VIII—41 г. НТ 5717 Заказ № 320. Тираж 2.000 экз.
Объем 2 п. л.

Отпечатано в тип. № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5

## «ВЫРĂС СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧĔСЕН ЗАДАЧИСЕМ» ЯТЛĂ БРОШЮРĂН ИККĔМĔШ ИЗДАНИ УМСĂМАХĔ[1]

Çак брошюрăна, халь агитаци валли кирлĕ пирки иккĕмĕш изданипе тухаканскерне, çырнăранпа шăп пилĕк çул иртрĕ. Çав кĕске вăхăтра пирĕн çамрăк рабочи движени малалла пит те пысăк утăм турĕ, вырăс социал-демократин положенийĕнче тата унăн вăйĕнче пит те тарăн улшăнусем пулса иртрĕç, çавăнпа, кивĕ брошюрăна мĕншĕн çаплипех çĕнĕрен пичетлесе кăларма кирлĕ пулнинчен, тен, тĕлĕнмелле пек туйăнĕ. Е „Вырăс социал-демократсен задачисем", 1897 çулхипе танлаштарсан, 1902-мĕш çулта нимĕн чухлĕ те улшăнман-ши вара? Автор ун чухне хăйĕн партиллĕ ĕçĕн „пирвайхи опытне" кăна итог тунă вĕт-ха, е вăл тĕлĕшпе авторăн хăйĕн шухăшĕсем пĕр утăм та малалла кайман-ши вара?

Çакăн пек (е çакна майлă) ыйтусем, тен, вулакансенчен пĕрин кăна мар сиксе тухĕç; вăл ыйтусем çине ответ парас тесен, пирĕн „Мĕн тумалла?"[1] ятлă брошюра çине кăтартса памалла пулать, тата унта каланинчен илсе хăшпĕр шухăшсене хушса памалла пулать. Кăтартса пани—социал-демократин *ку чухнехи* задачисем çинчен автор мĕнле шухăшланине астутармашкăн кирлĕ; хушса пани—унта (31—2, 121, 138 стр.)*, çак тепĕр хут пичетлесе кăларакан брошюрăна çырнă условисем çинчен калани тĕлĕшпе, тата вырăс социал-демократи аталанăвĕн уйрăм „тапхăрĕ" çине вăл мĕнле пăхни тĕлĕшпе кирлĕ. Асăннă брошюрăра („Мĕн тумалла?") пĕтĕмĕшпе ун пек тапхăр эпĕ тăваттă кăтартрăм, çавсенчен юлашки тапхăрне „хальхи, тата хăшпĕр таран пулас вăхăтри тапхăр шутне" кĕртнĕ, виççĕмĕш тапхăр тесе „экономизмлă" юхăм, 1897—8 çултан пуçласа, пуçпулса (е, сахалран та, анлăн сарăлса) тăнине каланă, иккĕмĕш тапхăр тесе 1894—8-мĕш çулсене, пĕрремĕш тесе—1884—1894 çç. каланă. Иккĕмĕш тапхăрта, виççĕмĕшпе танлаштарсан, эпир социал-демократсем хуш-

---

* Сочиненисем, IV том, 395—396, 482, 499 стр. пăхăр. *Ред.*

шинче разногласисем курмастпăр. Ун чухне социал-демократи идея тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ пулнă, ун чухнех ĕнтĕ практикăллă, организациллĕ пĕрлĕх тума та хăтланса пăхнă (Рос. С.-Д. Р. Парти туса хунă). Ун чухне социал-демократсен тĕп тимлĕхĕ—партин хăш те пĕр шалти ыйтăвĕсене çутатса парасси, татса парасси (виççĕмĕш тапхăрти пек) пулман,—ун чухне, пĕр енчен,—социал-демократин противникĕсемпе идея тĕлĕшĕнчен кĕрешмелле, тепĕр енчен,—партин практикăллă ĕçне аталантармалла пулнă.

Социал-демократсен теорийĕпе практики хушшинче, „экономизм“[2] саманинчи пек, антагонизм пулман.

Çак брошюра шăпах социал-демократин ун чухнехи положенитата ун чухнехи „задачисен“ уйрăмлăхĕсене кăтартса парать те. Брошюра практикăллă ĕçе тарăнлатма, сарма чĕнет, ăна тума мĕнле те пулин пĕтĕмĕшлĕ шухăшсем, принципсем, теорисем тĕлĕшпе калаçса татăлманнинче нимĕнле „чăрмав“ та курмасть, политикăллă тата экономикăллă кĕрешĕве пĕрле çыхăнтарса пырас тĕлĕшпе йывăрлăх (ун чухне пулманскере) курмасть. Брошюра социал-демократин противникĕсене, народоволецсемпе народоправецсене, хăйĕн принципиаллă позицине ăнлантарса парать, вĕсене çĕнĕ движенирен ирĕксĕрех пăрăнтаракан уçăмлă мар шухăшсемпе йăнăш шутланисене уççăн çутатса, сирсе яма тăрăшать.

Акă вара хальхи вăхăтра, „экономизм“ тапхăрĕ, чăн та ĕнтĕ, пĕтсе çите пуçланă чухне, социал-демократсен позицийĕ каллех, пилĕк çул малтан мĕнле пулнă, çавăн майлах иккен. Паллах, халĕ пирĕн умра тăракан задачăсем, çав вăхăтранпа движени пит те хытă ӳснĕ май, калама çук кăткăсрах,—анчах хальхи самантăн тĕп уйрăмлăхĕсем анлăрах никĕс çинче, пысăкрах виçепе çав „иккĕмĕш“ тапхăрăн уйрăмлăхĕсенех çĕнĕрен чĕртсе яраççĕ. Экономизм пĕтсе пынă май, пирĕн теорипе, программăпа, тактикăллă задачăсемпе практика хушшинчи çураçусăрлăх пĕтсе пырать. Эпир каллех практикăллă ĕçе тарăнлатмашкăн, сармашкăн хăюллăн чĕнме пултаратпăр, чĕнмелле те, мĕншĕн тесен çав ĕçĕн теориллĕ никĕсне чылаях тасатнă ĕнтĕ. Пирĕн каллех Российăри социал-демократла мар вăрттăн юхăмсем çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, çитменне пирĕн умра, тĕпрен илсен, çав иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсен пĕрремĕш çурринчи пек юхăмсемех тухса тăраççĕ, анчах та вĕсем ытларах аталаннă, формăланса çитнĕ, „пиçсе çитнĕ“ юхăмсем пулаççĕ.

Народоволецсем, хăйсен кивĕ тумĕсене хывса пăрахса пынă май, „социалист-революционерсем“[3] пулса тăрасси патнех çитрĕç, вĕсем çав ятпа хăйĕнпех ĕнтĕ хăйсем çурма çулта чарăнса

тăнине кăтартрĕç. Киввинчен („вырăс“ социализмĕнчен) вĕсем уйрăлса кайнă, çĕнни çумне (социал-демократи çумне) сыпçăнман. Ку чухнехи этемлĕх пĕлекен пĕртен-пĕр теорие, революциллĕ социализмăн пĕртен-пĕр теорине, урăхла каласан, марксизма, вĕсем, буржуаллă („социалистсем“!) тата оппортунистла („революционерсем“!) критикăпа усă курса, архива парасçĕ. Идейăсăрлăхпа принципсăрлăха пула вĕсем практикăра „революциллĕ авантюризм“ çулĕ çине тухса тăраççĕ; „революциллĕ авантюризм“ вĕсем интеллигенцие, пролетариата, хресченсене—çак социальнăй сийсемпе классене—пĕр виçепе виçме тăрăшнинче те, вĕсен „пĕрмаях“ террор тăвас текен шавлă вĕрентĕвĕнче те, вĕсен паллă аграрнăй программа-минимумĕнче те (çĕре социализацилесси,—кооперацисем,—ят çĕр çумне çыпăçтарасси. „Искра“[4] хаçатăн 23 тата 24 №№ пăхăр*), вĕсем либералсем çине мĕнле пăхнинче те („Рев. Россия“[5] 9 № тата г. Житловский[6] „Освобождение“[7] çинчен çырнă рецензие „Socialistische Monatschefte“ 9 №-че пăхăр), тата ытти нумай тĕлĕшпе те—палăрса тăрать; ун пирки вара пирĕн пĕрре кăна мар каласма тивет пулмалла-ха. Интеллигентла тĕрексĕрлĕхе çимĕç парса тăракан, пурăнса ирттернĕ, кивелнĕ, вилнĕ, моднăй япаласене çыхăнтармашкăн радикалла шухăшлă çынсене кăмăл парса тăракан, хăйĕн класлă кĕрешӳне туса пыракан пролетариатпа пĕрле вĕсене хăйсен ĕçне пĕтĕçтерме чаракан социальнăй элементсемпе условисем Российăра çав тери нумай-ха,—çавăнпа та капиталистла эволюци тата классен хирĕçĕвĕсем çивĕчленни вĕсен мĕнпур никĕсĕсене туртса иличчен, „социально-революциллĕ“ майлă юхăма е юхăмсене вырăс социал-демократин шута илмеллех пулать.

Народоправецсем, тĕлли-паллисĕрлĕх тĕлĕшпе (малалла 20—22 стр. пăх)** 1897-мĕш çулта хальхи социал-революционерсенчен кăшт та уйăрăлса тăманскерсем, çавăн пирки пит хăвăрт куçран çухалчĕç. Анчах вĕсен „урă“ ăслă идейи—политикăллă ирĕклĕх ыйтассине социализмран пачах уйăрмалла тени—вилмен, вилме те пултарайман, мĕншĕн тесен Российăра шултăра тата вак буржуазин мĕнпур нумай тĕрлĕ сийĕсем хушшинче либералладемократиллĕ юхăмсем пит те вăйлă тата пĕрмаях вăйланса пыраççĕ. Çавăнпа народоправецсен законлă наследникĕ, вĕсен ĕçне усăнах, тĕпĕ-йĕрĕпе, пиçĕхсе çитерсе малалла яраканни—Российăра хăйĕн тавра буржуаллă оппозици представителĕсене пĕр-

*) Сочиненисем, V том, 143 стр. пăхăр. *Ред.*

**) Сочиненисем, II том, 184—185 стр. пăхăр. Ку изданинче 24—25 стр. пăхăр. *Ред.*

лештерме тăрăшакан либераллă „Освобождение“ пулса тăнă. Реформăчченхи кивĕ Россия, патриархальнăй хресченсем, тата общинăпа та, ялхуçалăх кооперацийĕсемпе те, „сисме май çук“ террорпа та пĕр пекех хавхаланма юратакан кивĕ сăнарлă интеллигенци пур-пĕрех пăрахăçа тухмалла, ишĕлсе пĕтмелле,—çавăн пекех капитализмлă Российăра пурлăхлă классем, буржуазипе вак буржуази те, пур-пĕрех ӳссе пиçсе çитмеллех; вĕсем хăйсене мăка, тискер, хакла ларакан тата социализмран нимĕн чухлĕ те хӳтĕлеймен абсолютлă правительствăна тытса усрани усăллă пулас çуккине ăнланма пуçласа, ĕç çине урă куçпа, либерализмла пăхаççĕ, - вĕсем класлă кĕрешӳвĕн формине мĕнле класс пуçпулса тăрассине Европăри пек тума хушаççĕ,—вĕсем хăйсен ăшчикĕпе (пролетариат тăна кĕрсе, ӳссе пыма пуçăннă тапхăрта) хăйсен класлă, буржуаллă интересĕсене, нимĕнле класлă кĕрешӳ те пулмалла мар, тенипе витсе тăма тăрăшаççĕ.

Çавăнпа пирĕн „земски конституциллĕ парти“ тума хăтланакан либеральнăй помещиксене тав тума сăлтавсем чылаях пур. Пĕрремĕшĕнчен,—ытла кирлех марринчен пуçлар,—вĕсем Струве[8] г-на, ăна квази-марксистран татăклăнах либерал туса ярса, ăна вырăс социал-демократинчен кăларса ывăтнăшăн, вара пурин умĕнче те тата кашнин умĕнче те, пĕтĕмĕшпе илсен, бернштенианствăн[9] уйрăмăнах вырăс бернштенианствин чăн-чăн пĕлтерĕшне пире чĕрĕ пример çинче кăтартса пама пулăшнăшăн вĕсене тав тăвар. Иккĕмĕшĕнчен, вырăс буржуазин тĕрлĕ сийĕсене ăнланулла-либераллă тума хăтланса, „Освобождение“ çак ĕçре пире рабочисен ытларах та ытларах массисене ăнланулла социалистсем пулса тăрас ĕçе хăвăртлатма пулăшĕ. Тĕлсĕр, либералла-народникла квази-социализм пирте çав тери нумай пулнă, халь те нумай, çавăнпа та, унпа танлаштарсан, çĕнĕ либералла юхăм уççăнах пĕр утăм малалла туни пулса тăрать. Рабочисене халь вырăссен либераллă тата демократиллĕ буржуази çинчен уççăн ăнлантарса пама, рабочисен политикăллă хăйне уйрăм парти—пĕтĕм тĕнчери социал-демократипе пĕрлĕхлĕ пулса тăракан парти—кирлине ăнлантарса пама çав тери çăмăл,—интеллигентсене хăйсен позицине палăртма—либерализм е социал-демократи майлă пулассине татăклăнах палăртма çав тери çăмăл пулать: çак ӳссе, вăйланса пыракан икĕ пĕр-пĕрне „тĕлме-хирĕçлĕхсем“ хушшинче иккĕленчĕклĕ теорисемпе юхăмсем пит те хăвăрт пăчланса пĕтĕç. Виççĕмĕшĕнчен,—ку вара, паллах, чи кирли,—либералсем самодержавин буржуазипе тата интеллигенцин хăшпĕр сийĕсемпе тунă союзне хăйсен оппозицийĕпе хавшатаççĕ *пулсан*, эпир вĕсене тав тăвăпăр. Эпир: „пулсан“ тетпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем

самодержавине кӑмӑла кайма тӑрӑшнипе, мирлӗ культурӑллӑ ӗҫе мухтанипе, „тенденциллӗ“ революционерсене хирӗҫ вӑрҫӑ тунипе т. ыт. те, либералсем самодержавие хавшатнинчен ытларах самодержавипе кӗрешессине хавшатаҫҫӗ. Либералсен кирек мӗнле ҫурма шухӑшӗсене те, правительствӑпала кирек мӗнле йӑпӑлтатма хӑтланнине те ним парӑнми, ним килӗшми тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пырса, эпир ҫапла тунипе вара либераллӑ буржуа господасен политикӑллӑ ӗҫӗн сутӑнчӑклӑ енӗсене вӑйсӑрлатӑпӑр, ҫапла тунипе эпир вӗсен сулахай аллисене хӑртса хурӑпӑр та, вӗсен сылтӑм аллисен ӗҫне ӑнӑҫлӑрах тума май парӑпӑр.

Ҫапла вара, народоволецсем те народоправецсем те хӑйсен чӑн-чӑн туртӑмне тата хӑйсен чӑн-чӑн ӑшчиккине аталантарас, палӑртас, формӑлас тӗлӗшпе малалла питӗ пысӑк утӑмсем турӗҫ. Иртнӗ ӗмӗрхи 90-мӗш ҫулсен пӗрремӗш ҫурринче революциллӗ ҫамрӑксен пӗчӗк кружоксем хушшинче ҫеҫ пулса иртнӗ кӗрешӳ халӗ, ӳссе ҫитнӗ политикӑллӑ юхӑмсен тата чӑн-чӑн политикӑллӑ партисен татӑклӑ кӗрешӗвӗ пулса тӑрса, ҫӗнӗрен пуҫланса каять.

Ҫавӑнпа та, „Задачӑсене“ тепӗр хут кӑларни ак ҫак тӗлӗшпе те усӑсӑр пулмӗ: партин ҫамрӑк членӗсене партин нумаях пулмасть иртнӗ пурнӑҫне вӑл аса илтерӗ, ытти юхӑмсем хушшинче социал-демократсен халь ҫеҫ пӗтӗмӗшпех палӑрнӑ положенийӗ пуҫланса кайнине кӑтартӗ, ку чухнехи самантӑн ӑшчиккипе пӗр пек, анчах ытларах кӑткӑс „задачисене“ уҫҫӑнрах, тӗплӗнрех ӑнланса илме пулӑшӗ.

Социал-демократи умӗнче халь хамӑр хушӑмӑрти кирек мӗнле сапаланчӑклӑха, пӑркаланассине пӗтерсе хурас, тачӑрах пӗтӗҫес, революциллӗ марксизмӑн ялавӗ айӗнче организацилӗх тӗлӗшпе пӗрлешсе каяс, — практика тӗлӗшпе ӗҫлекен мӗнпур социал-демократсене пӗрлештерсе, вӗсен ӗҫне тарӑнлатса сарас енне пӗтӗм вӑя хурас задача уйрӑмах вӑйлӑн тухса тӑрать, ҫакӑнпа пӗрлех тата ҫак ҫӳлте асӑннӑ юхӑмсен, социал-демократин тахҫантанпах ӗнтӗ шута илмелле пулнӑскерсен, чӑн-чӑн пӗлтерӗшне интеллигентсемпе рабочисен сарлака массисене ӑнлантарса парасси ҫине хытӑ ҫаврӑнса пӑхмалла.

1902 ҫ. август.

*Малтанласа 1902 ҫ. декабрьте „Лига“ кӑларнӑ брошюрӑра пичетленӗ.*

## «ВЫРӐС СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧӖСЕН ЗАДАЧИСЕМ» ЯТЛӐ БРОШЮРӐН ВИҪҪӖМӖШ ИЗДАНИН УМСӐМАХӖ

Ҫак брошюрӑн виҫҫӗмӗш изданийӗ Российӑри революци аталанӑвӗ 1897-мӗш ҫулхинчен, вӑл брошюрӑна ҫырнӑ чухнехинчен, тата 1902-мӗш ҫулхинчен, унӑн иккӗмӗш изданийӗ тухнӑ чухнехинчен, тӗпренех расна самантра тухать. Каламалли те ҫук, брошюра рабочи движенипе революциллӗ движенин хальхи положенине тивӗҫлӗ, ҫавӑн пекех тата Российӑри С.-Д. Рабочи Парти положенине тивӗҫлӗ ку чухнехи задачисене конкретлӑ кӑтартса памасть, социал-демократин тӗп задачисем ҫинчен пӗтӗмӗшле ҫеҫ каласа парать. Пирӗн партин ку чухнехи задачисем ҫинчен эпӗ хамӑн „Социал-демократин демократиллӗ революцири икӗ тактики"[10] ятлӑ брошюрӑра (Женева, 1905 ҫ.) ҫырнӑ. Ҫак икӗ брошюрӑна танлаштарса пӑхсан, социал-демократин пӗтӗмӗшлӗ задачисем тата хальхи самантри специальнӑй задачисем тӗлӗшпе авторӑн шухӑшсем йӗркеллӗ аталанса пынипе пыманни ҫинчен вулакансем пӗлме пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пек танлаштарни усӑсӑр пулманни, сӑмахран каласан, пирӗн либераллӑ-монархиллӗ буржуази ҫулпуҫӗ Струве г-н нумай пулмасть мӗнле хӑтланнинчен те курӑнать; вӑл „Освобождение" журналра революциллӗ социал-демократие (РСДРП III-мӗш съездне[11]) хӗҫпӑшаллӑ восстани ыйтуне бунтарла, пӗтӗмӗшле—революционистла лартнӑшӑн айӑпларӗ. Эпир ӗнтӗ „Пролетарий" хаҫатрах (9 №, „Революция учит") ак ҫакна палӑртрӑмӑр: „Вырӑс социал-демократсен задачисем" (1897 ҫул), „Мӗн тумалла?" (1902 ҫ.) произведенисене тата „Пролетарий"[12] хаҫата тулашӗнчен танлаштарса пӑхниех освобожденецсем айӑпланине сирсе ярать тата социал-демократсен восстани тӗлӗшӗнчи шухӑшӗ аталанни Российӑри революциллӗ движенин аталанӑвӗпе ҫыхӑнса тӑнине ҫирӗплетсе парать, терӗмӗр. Освобожденецсем айӑплани — либераллӑ монархишӗн тӑракан ҫынсен, революцие сутнине, халӑх интересне сутнине, хӑйсем патша влаҫӗпе килӗшӳ тума хӑтланнине пытарма тӑрӑшакан ҫынсен оппортунистла хӑтланӑвӗ ҫеҫ пулса тӑрать.

1905 ҫ. август.

*Малтанласа 1905 ҫулта кӗркунне ЦК РСДРП кӑларнӑ брошюрӑра пичетленӗ.*

## ВЫРĂС СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧĔСЕН ЗАДАЧИСЕМ

90-мĕш çулсен иккĕмĕш çурри вырăс революцийĕн ыйтăвĕсене лартас тата татса парас тĕлĕшпе пит те паллă хускану вăйланса кайнипе палăрса тăрать. Народоправецсен революциллĕ çĕнĕ партийĕ пуçланса кайни, социал-демократсен ӳссе пыракан влиянийĕ тата унăн ăнăçăвĕсем, народовольчествăн шалти эволюцийĕ,—çаксем пурте социалистсен—интеллигентсен тата рабочисен—кружокĕсенче те, вăрттăн литературăра та программа ыйтăвĕсене çивчĕн сӳтсе-явассине пуçарса ячĕç. Вăрттăн литература тĕлĕшпе çаксене кăтартса пама пулать: „Насущный вопрос" тата „Народное Право"[13], партин „Манифесчĕ" (1894), „Народная Воля"[14] группăн „Летучий листокĕ", „Союз русских социал-демократов", ютçĕршывра кăларакан „Работник"[15], революциллĕ брошюрăсем, нимрен ытла, рабочисем валли, кăларас тĕлĕшпе Российăра ĕç вăйлансах пыни, социал-демократла „Союз борьбы за освобождение рабочего класса", Петербургри 1896-мĕш çулти пит те паллă стачкăсем пулнă май, Петербургра агитаци ĕçне туни т. ыт. те.

Хальхи вăхăтра (1897 çул вĕçĕ) паян куна пит те кирлĕ ыйту, пирĕн шутпа, социал-демократсен *практикăллă* ĕçĕн ыйтăвĕ пулса тăрать. Эпир социал-демократизмăн *практикăллă* енне хытă асăрхаттаратпăр, мĕншĕн тесен унăн теориллĕ енĕ, вара пĕр енчен—ăна противниксем ниепле те ăнланасшăн пулман чи çивĕч тапхăртан, çак çĕнĕ юхăма пуçланнă чухнех путарма вăйлăн тăрăшнă тапхăртан, тепĕр енчен—социал-демократизм хăйĕн никĕсĕсене хĕрӳллĕн хӳтĕленĕ тапхăртан иртсе кайрĕ пулас. Социал-демократсен теориллĕ шухăшĕсене, *вĕсен никĕсри тата чи паллă енĕсене илсен*, халĕ çителĕклĕ çутатса панă пек туйăнать. Социал-демократизмăн *практикăллă* енĕ çинчен, унăн политикăллă *программи* çинчен, унăн ĕçри меслечĕсем çинчен, унăн тактики çинчен çителĕклĕ çутатса панă теме çук-ха. Шăпах çак тĕлĕшре, пирĕн шутпа, уçăмсăрлăхсем, пĕр-пĕрне ăнлан-

маннисем нимрен ытла пуçпулса тăраççĕ, çак уçăмсăрлăхсемпе пĕр-пĕрне ăнланманнисем теорире народовольствăран вĕçне çитиех уйăрăлса кайнă революционерсене, практикăра вара, е, пурăна киле пурпĕрех, рабочисем хушшинче пропагандăпа агитаци тăвасси патне, унтан та ытларах: рабочисем хушшинче хăйсен ĕçне *класс кĕрешĕвĕн* никĕсĕ çинче тăвасси патне пыракан;—е *демократиллĕ* задачăсене хăйсен пĕтĕм программин, пĕтĕм революциллĕ ĕçĕн никĕсне хума тăрăшакан революционерсене социал-демократизмпа таччăнах çывхарма чарса тăрать. Эпир йăнăшмастпăр пулсан, çак асăннă характеристика Российăра хальхи вăхăтра социал-демократсемпе юнашарах ĕçлекен революциллĕ икĕ группăна, шăпах: народоволецсене тата народоправецсене тĕл пырса тивет.

Çавăнпа, социал-демократсен *практикăллă* задачисене ăнлантарса пама тăрăшни тата хальхи виçĕ программăран мĕншĕн эпир вĕсен программине чи юрăхлă тесе шутланин сăлтавне, вăл программăна хирĕç калани, вара нумай тĕлĕшпе ăна ăнланманнинчен килнине çутатса пама тăрăшни хальхи вăхăтра пит те вырăнлă пек туйăнать пире.

Социал-демократсен практикăллă ĕçĕ, паллă ĕнтĕ, хăй умне пролетариатăн класлă кĕрешӳне ертсе пырас, çав кĕрешĕве икĕ енĕпе те организацилес задача лартать: пĕр енĕ—социализмшăн (капиталистсен класне хирĕç кĕрешни, вăл кĕрешӳ класлă строя аркатса, социализмлă производство организацилеме тăрăшать); тепĕр енĕ—демократишĕн (абсолютизма хирĕç кĕрешни, вăл кĕрешӳ Россия валли политикăллă ирĕклĕх çĕнтерсе илсе, Российăра политикăллă, обществăллă строя демократизацилеме тăрăшать). Эпир: *паллă* терĕмĕр. Чăнах та, вырăс социал-демократсем, хăйсем уйрăм социальнă-революциллĕ юхăм пулса пуçланса кайнăранпах, хăйсен ĕçĕн çавăн пек задачи çине яланах пит те татăклă, уççăн кăтартса панă, пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕ икĕ майпа палăрнине тата унăн содержанине яланах палăртса пынă, яланах хăйсен социалистла тата демократла задачисене уйăрлми çыхăнтарса пырассишĕн çине тăнă,—вăл çыхăну, вĕсем хăйсене социал-демократ тесе йышăннă ятранах уççăн курăнса тăрать. Çапла пулин те, социал-демократсем çинчен пит те йăнăш шухăшлакан, вĕсене политикăллă кĕрешĕве йышăнманшăн т. ыт. айăплакан социалистсене эсир халĕ те час-часах тĕлпулатăр. Вырăс социал-демократин практикăллă ĕçĕн икĕ енне те характеристика парасси çинче халĕ ĕнтĕ кăшт чарăнса тăрар-ха.

Социалистла ĕçрен пуçлар. Петербургра социал-демократла „Союз борьбы за освобождение рабочего класса“ Петербургри

рабочисем хушшинче хӑйӗн ӗҫне палӑртнӑ хыҫҫӑн, ҫав тӗлӗшпе социал-демократла ӗҫӗн характерӗ пит те уҫҫӑн курӑнмалла пек туйӑнать. Вырӑс социал-демокрачӗсен социалистла ӗҫӗ акӑ мӗнле: научнӑй социализм вӗрентӗвӗсене *пропагандӑласси*, ку чухнехи обществӑллӑ-экономикӑллӑ строй ҫинчен, унӑн никӗсӗсемпе унӑн аталанӑвӗ ҫинчен, вырӑс обществин тӗрлӗрен *класӗсем* ҫинчен, вӗсен пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнӑвӗсем ҫинчен, ҫак классем пӗр-пӗринпе кӗрешни ҫинчен, рабочи класӑн ҫав кӗрешӳри ролӗ ҫинчен, вӑйсӑрланакан тата аталанакан классем ҫине, капитализмӑн иртнӗ кун-ҫулӗпе пулас кунҫулӗ ҫине рабочи класс мӗнле пӑхни ҫинчен, пӗтӗм тӗнчери социал-демократин тата вырӑс рабочи класӗн историллӗ задачи ҫинчен рабочи класс хушшинче тӗрӗс ӑнлану сарасси пулса тӑрать. Рабочисем хушшинче *агитаци* тӑвас ӗҫ пропагандӑпа ним уйӑрӑлми ҫыхӑнса тӑрать, Российӑри ку чухнехи политикӑллӑ условисенче тата рабочисен массисем аталаннӑ условинче агитаци ӗҫӗ, паллах, малти вырӑна тухса тӑрать. Рабочисем хушшинче ак мӗнле агитаци тумалла: рабочи класс кӗрешӗвӗн мӗнпур стихийлӑ палӑрӑмӗсене те, ӗҫ кунӗшӗн, ӗҫ укҫишӗн, ӗҫ условишӗн т. ыт. те, т. ыт. те рабочисем капиталистсемпе тытӑҫнӑ ҫӗре социал-демократсен хутшӑнмалла. Пирӗн задача ҫакӑн пек: хамӑр ӗҫе рабочи пурнӑҫӗн практикӑри, йӑлари ыйтӑвӗсемпе пӗтӗҫтермелле, рабочисене ҫав ыйтусене ӑнланса илме пулӑшмалла, рабочисен тимлӗхне чи паллӑрах киревсӗрлӗхсем ҫине ҫавӑрмалла, хуҫисем умне лартмалли хӑйсен требованисене тӗрӗсрех тата пурнӑҫра кирлӗрех формула пама пулӑшмалла, рабочисене юлташлӑх ҫинчен тӑна кӗртмелле, пӗтӗм вырӑс рабочисен, пролетариатӑн пӗтӗм тӗнчери ҫарӗн пайӗ пулса тӑракан, пӗрлӗхлӗ рабочи класс пулса тӑракан рабочисен пӗтӗмӗшле интересӗсемпе пӗтӗмӗшле ӗҫӗ ҫинчен рабочисене тӑна кӗртмелле. Рабочисем хушшинче кружоксем организацилесси, вӗсемпе социал-демократсен тӗп группи хушшинче тӗрӗс тата вӑрттӑн ҫыхӑну тытса тӑрасси, рабочисем валли литература пичетлесе кӑларасси, тата сарасси, рабочи движенин мӗнпур центрӗсенчен корреспонденцисем тӑратас ӗҫе организацилесси, агитацилле листоксемпе прокламацисем пичетлесе кӑларасси тата вӗсене сарасси, опытлӑ агитаторсен йышне хатӗрлесси—пӗтӗмӗшпе илсен, вырӑс социал-демократин социалистла ӗҫӗ ҫакӑн пек пулса пымалла.

Пирӗн ӗҫ нимрен малтан тата пуринчен ытларах фабрикӑсемпе заводсенчи, хуласенчи рабочисем хушшинче пулса пырать. Вырӑс социал-демократин хӑйӗн вӑйне сапалантарса ямалла мар, унӑн ӗнтӗ промышленноҫри пролетариат хушшинче,

социал-демократла идейăсене пуринчен ытларах ăнланса илме пултараканскер, ăстăн тата политика тĕлĕшпе ытларах аталаннăскер, хăйĕн хисепĕ тĕлĕшпе тата çĕршывăн политика тĕлĕшпе шултăра центрĕсенче концентрациленни енчен чи малта тăраканскер хушшинче вăя пухса ĕçлемелле. Фабрикăсемпе заводсенчи, хуласенчи рабочисем хушшинче революцилле çирĕп организаци тăвасси, çавăнпа та, хальхи вăхăтра социал-демократин пĕрремĕш тата чи кирлĕ задачи пулса тăрать, вăл задачăран пăрăнса кайни хальхи вăхăтра ытла та ăссăр япала пулнă пулĕччĕ. Анчах та, хамăр вăя фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем хушшинче ĕçлесси çине хума кирлине йышăнса, вăйсене сапалантарса янине сивлесе, эпир пачах та: вырăс социал-демократийĕ вырăс пролетариачĕпе рабочи класăн ытти сийĕсем çине çаврăнса ан пăхтăр, тесе каласшăн мар. Пачах та ун пек мар. Вырăссен фабрикăри рабочийĕ хăйĕн пурнăçĕн условийĕсене пула, час-часах кустарьсемпе—çав промышленнăй пролетариатпа,—фабрика тулашĕнче, хуласемпе ялсенче сапаланнăскерпе тата та ытларах япăх условисенче пурăнаканскерпе, пит те тачă çыхăнса тăрать. Вырăссен фабрикăри рабочийĕ ялсенчи халăхпа та тӳрремĕнех хутшăнать (фабрикăри рабочисен чылайăшĕн ялсенче çемьисем пурăнаççĕ), çапла вара, вăл ĕнтĕ ял пролетариачĕпе, профессиллĕ батраксен тата кунăн кĕрĕшсе ĕçлекенсен нумай миллионлă массисемпе хутшăнмасăр, çавăн пекех тата юхăнса çитнĕ хресченсемпе, хăйсен пĕчĕк çĕр татăкĕпе çыхăнса кивçеншĕн ĕçлесе пурăнакан тата сайра хутра тупăнакан „ĕçпе", урăхла каласан, çав тара кĕрĕшнĕ ĕçпех пурăнакан хресченсемпе çывăх хутшăнмасăр пурăнма пултараймасть. Вырăс социал-демокрачĕсем хăйсен çынĕсене кустарьсемпе ялти рабочисем хушшинче *ĕçлеме ярас* вăхăт çитмен тесе шутлаççĕ, анчах та социал-демократсем вĕсене асăрхамасăр пăрса хăварма пачах шутламаççĕ, вĕсем малта пыракан рабочисене, çав рабочисем пролетариатăн ытларах кая юлнă сийсемпе хутшăнса, вĕсем хушшине те класс кĕрешĕвĕ идейине, социализм идейине, пĕтĕмĕшпе илсен, вырăс социал-демократин, уйрăмăнах вырăс пролетариачĕн политикăллă задачисен идейине илсе кĕртчĕр тесе, кустарьсемпе ялти рабочисен пурнăçĕ çинчен калакан ыйтусем тĕлĕшпе те вĕрентме тăрăшаççĕ. Фабрикăсемпе заводсенчи, хуласенчи рабочисем хушшинче ĕçсем çав тери нумай чух, агитаторсене кустарьсемпе ялти рабочисем патне яни вырăнлă мар, анчах нумай чухне социалист-рабочий, хăйĕн кĕтмен çĕртенех çав çынсемпе кулленех тĕл пулма тивет, унăн вара çав тĕл пулнă вăхăтсемпе усă курма пĕлмелле, Российăри социал-демократин пĕтĕмĕшлĕ за-

дачисене ӑнланма пӗлмелле. Çавӑнпа та, вырӑс социал-демократине ансӑрлӑх пирки айӑплакансем, пӗр фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисемшӗн кӑна çине тӑрса ӗçлет, ӗçхалӑхӗн массисене шута илмесӗр тӑрать тесе айӑплакансем пит те пысӑк йӑнӑш тӑваççӗ. Пачах урӑхла, пролетариатӑн малта пыракан сийсем хушшинче агитаци туни пӗтӗм вырӑс пролетариатне те (движени аслӑланса пынӑ май) вӑратмалли чи тӗрӗс тата пӗртен-пӗр çул пулса тӑрать. Хулари рабочисем хушшинче социализма тата класс кӗрешӗвӗн идейине сарни çав идейӑсене пӗчӗкрех, вакрах каналсем тӑрӑх та пурпӗрех сарса ярать: çавна тӑвас тесен, çав кӑтартнӑ идейӑсем чи лайӑхрах хатӗрленнӗ çынсем хушшинче тарӑн тымарсем яни кирлӗ, вӑл идейӑсене вырӑс рабочи движенин тата вырӑс революцин авангарчӗ лайӑх пӗлсе тӑни кирлӗ. Пӗтӗм вӑя фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисем хушшинче ӗçлесси çине хурса, вырӑс социал-демократийӗ социалистла ӗçсене практикӑра пролетариатӑн класла кӗрешӗвӗ никӗсӗ çине лартма шутлакан вырӑс революционерӗсене пулӑшма хатӗр; анчах çав вӑхӑтрах, революционерсен ытти фракцийӗсемпе тунӑ нимӗнле практикӑллӑ союзсем те теори, программа, ялав тӗлӗшпе компромиссем е уступкӑсем патне илсе пыма пултарайманнине, тата илсе пымалла та маррине вӑл ним чухлӗ те пытарса тӑмасть. Революциллӗ движени ялавӗ пулса тӑракан революциллӗ теори хальхи вӑхӑтра научнӑй социализмпа класс кӗрешӗвӗн вӗрентӗвӗ кӑна пулма пултарнине ӗненсе, вырӑс социал-демокрачӗсем ӑна мӗнпур вӑйпа сарӗç, суйса ӑнлантарса парасран хӳтӗлӗç, Российӑри рабочисен çакçамрӑк движенине палӑрсах çитмен вӗрентӳсемпе çыхӑнтарма тӗрлӗ майпа хӑтланнисене пурне те хирӗç тӑрӗç. Российӑри *социалистсем пурте социал-демократсем* пулса тӑма кирлине теориллӗ ӑс-шухӑш уççӑн *ӗнентерсе* парать, социал-демократсен практикӑллӑ ӗçӗ вара *кӑтартса* парать.

Социал-демократсен *демократиллӗ* задачисемпе демократиллӗ ӗçӗсем патне куçатпӑр. Татах тепӗр хут калатпӑр, çак ӗç социалистла ӗçпе ним *уйӑрӑлми* çыхӑнса тӑрать. Рабочисем хушшинче *пропаганда тунӑ чухне*, социал-демократсем политика ыйтӑвӗсенчен иртсе кайма *пултараймаççӗ*, вӑл ыйтусенчен кирек мӗнле иртсе кайма е вӗсене пӑрса хӑварма хӑтланнине те пысӑк йӑнӑш туни тесе тата пӗтӗм тӗнчери социал-демократизмӑн тӗп положенинчен чакни тесе шутлӑччӗç. Научнӑй социализма пропагандӑланипе пӗрлех, вырӑс социал-демокрачӗсем рабочисен массисем хушшинче *демократиллӗ идейӑсене* те пропагандӑлас задача, абсолютизм çинчен, ун мӗнпур ӗçӗсене палӑртса, унӑн класла содержанийӗ çинчен, ӑна пурпӗрех сирпӗт-

се антарма кирли ҫинчен, политикăллă ирĕклĕхе кĕрешсе илмесĕр, Российăри политикăллă тата обществăллă строя демократизацилемесĕр рабочисен ĕҫĕшĕн ăнăҫлă кĕрешме май ҫукки ҫинчен ăнлану сарас задача лартаҫҫĕ. Рабочисем хушшинче ҫывăхри *экономикăллă* требованисен никĕсĕ ҫинче *агитаци* туса, социал-демократсем ҫавăнпа пĕрлех ăна рабочи класăн ҫывăхри политикăллă нушисен, йывăрлăхĕсен, требованисен никĕсĕ ҫинче агитаци тăвассипе те ҫыхăнтараҫҫĕ,—кашни стачкăра, рабочисемпе капиталистсем хушшинчи кашни тытăҫурах палăракан полицейски пусмăра хирĕҫ агитаци тăвассипе,—рабочисен, пĕтĕм вырăс гражданĕсен шутне кĕрекенскерсен, тата вĕсенчен пуринчен те ытларах пусмăр тӳсекен, пуринчен те ытларах правасăр класăн прависене хĕснине хирĕҫ агитаци тăвассипе,—абсолютизмăн кашни ытларах палăракан представителĕпе лакейне рабочисемпе ҫывăх хутшăнакан тата рабочи класа унăн политикăллă чуралăхне уҫҫăнах кăтартаканскерне хирĕҫ агитаци тăвассипе ҫыхăнтараҫҫĕ. Рабочисен экономикăллă пурнăҫĕнче экономикăллă агитаци валли усă курма юрăхсăрри пĕр ыйту та ҫук пулсан, шăп ҫавăн пекех политикăллă енĕпе те политикăллă агитацишĕн юрăхлă пулма пултарман пĕр ыйту та ҫук. Ҫак икĕ тĕрлĕ агитаци социал-демократсен ĕҫĕнче пĕр-пĕринпе, пĕр медалĕн икĕ енĕ пекех, ним уйăрăлми ҫыхăнса тăраҫҫĕ. Экономикăллă агитаци те, политикăллă агитаци те пролетариатăн класлă ăнлануне аталантарма иккĕш те пĕр пекех кирлĕ, экономикăллă агитаци те, политикăллă агитаци те вырăс рабочисен класлă кĕрешӳне ертсе пымашкăн иккĕш те пĕр пекех кирлĕ, мĕншĕн тесен кирек мĕнле класлă кĕрешӳ те политикăллă кĕрешӳ пулса тăрать. Ку агитаци те, тепри те, рабочисен ăстăнне вăратса, вĕсене организацилесе, дисциплинăлантарса, юлташла пулса пĕрле ĕҫлеме, социал-демократиллĕ идеалсемшĕн кĕрешме воспитани парса пырса, рабочисене хăйсен вăйне чи ҫывăх ыйтусем ҫинче, чи ҫывăх нушасем ҫинче тĕрĕслесе пăхма май парать; хăйсен экономикăллă положенине лайăхлатса, организациленнĕ рабочисен вăйне ирĕксĕрех капиталистсене шута хуртарса, правительствăна рабочисен прависене ирĕксĕрех аслăлаттарса, вĕсен требованисене итлеттерсе, социал-демократла ҫирĕп организаци ертсе пыракан рабочисен массисем правительство ҫине кураймасăр пăхнине палăртса, ҫав правительствăна яланах хăратса тăрса, рабочисене хăйсен тăшманĕнчен хăшпĕр уступкăсем илме май парать.

*Социалистла* тата *демократла* пропаганда *тата* агитаци пĕр-пĕринпе ним уйăрăлми ҫывăх тăнине, ҫав икĕ тĕлĕшпе те

революциллӗ ӗҫ йӑлтах пӗр шайра пулса пымаллине эпир кӑтартрӑмӑр. Анчах та ҫак икӗ тӗслӗ ӗҫпе кӗрешӳ хушшинче нысӑк уйрӑмлӑх та пур. Вӑл уйрӑмлӑх ак ҫакӑнта пулать: экономикӑллӑ кӗрешӳре пролетариат пачах пӗр пӗчченех, ӑна хирӗҫ ҫӗрхуҫисем—дворянсем те, буржуази те тӑрать, пролетариат еннелле туртӑнакан вак буржуази элеменчӗсен пулӑшӑвӗпе ҫеҫ (унпа та яланах мар) хӑшпӗр чухне усӑ курать. Ҫав вӑхӑтрах, демократиллӗ, *политикӑллӑ* кӗрешӳре вырӑс рабочи класс пӗр пӗччен мар; унпа пӗрле политика тӗлӗшпе мӗнпур оппозициллӗ элементсем, халӑх сийӗсем тата оппозициллӗ мӗнпур классем тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем абсолютизма хирӗҫ пыраҫҫӗ, ӑна хирӗҫ тӗрлӗ формӑсемпе кӗрешеҫҫӗ. Пролетариатпа *юнашар* кунта буржуазин е вӗреннӗ классен е вак буржуазин, е абсолютизм хӗсӗрлекен халӑхсен, е религисемпе сектӑсен т. ыт. те, т. ыт. те оппозициллӗ элеменчӗсем тӑраҫҫӗ. Хӑйне хӑех ыйту тухса тӑрать: рабочи класӑн ҫак элементсемпе мӗнле ҫыхӑну тытса тӑмалла (1),—Тата—(2)—абсолютизма хирӗҫ пӗрле кӗрешмешкӗн унӑн ҫавсемпе пӗрлешмелле мар-ши? Социал-демократсем пурте, социализмлӑ революциччен малтан Российӑра политикӑллӑ революци пулмалла тесе, йышӑнаҫҫӗ вӗт-ха; абсолютизма хирӗҫ кӗрешес тесе, политикӑллӑ мӗнпур оппозициллӗ элементсемпе пӗрлешсе, халлӗхе социализма аякка хӑвармалла мар-и, абсолютизма хирӗҫ пыракан кӗрешӗве вӑйлатмашкӑн пурпӗрех ҫапла тумалла пулмӗ-ши?

Икӗ ыйтуне те пӑхса тухар.

Абсолютизма хирӗҫ кӗрешекен рабочи класӑн политика тӗлӗшпе оппозициллӗ ытти мӗнпур обществӑллӑ классемпе групӑсем ҫине мӗнле пӑхмалли ҫинчен калас пулсан, ун ҫинчен социал-демократизмӑн тӗп принципӗсем пит те тӗрӗс каласа кӑтартаҫҫӗ, вӗсене „Коммунистсен Манифесчӗ“ ятлӑ чаплӑ произведенире ҫырса панӑ. Обществӑллӑ прогрессивлӑ классем реакциллӗ классене хирӗҫ кӗрешнине, буржуази привилегиллӗ, сословиллӗ ҫӗрхуҫисене тата чиновничествӑна хирӗҫ кӗрешнине, шултӑра буржуази вак буржуазин реакциллӗ ӗмӗчӗсене хирӗҫ кӗрешнине социал-демократсем пулӑшу параҫҫӗ. Ҫав пулӑшу социал-демократла мар программӑсемпе, принципсемпе нимӗнле килӗштерӳ пуласса та пӗлтермест, ун пек тума хушмасть те, вӑл—*ҫак* тӑшмана хирӗҫ кӗрешме союзнике пулӑшни пулать, ҫак пулӑшӑва социал-демократсем пӗтӗмӗшле тӑшмана хӑвӑртрах пӗтерес тесе параҫҫӗ, анчах ҫак вӑхӑтлӑх союзниксенчен вӗсем *хӑйсене валли* ним те кӗтмеҫҫӗ, вӗсене нимӗнле уступка та тумаҫҫӗ. Ку чухнехи обществӑллӑ строя хирӗҫ пыракан ки-

рек мĕнле революцилле движение те, пусмарти кирек мĕнле халăха та, хĕсĕрлĕх тÿссе пурăнакан кирек-мĕнле религие те, хĕсĕклĕхре пурăнакан пур сословисене те, т. ыт. те пĕртанлăхшăн кĕрешнĕ çĕрте социал-демократсем пулăшу парса тăраççĕ.

Политика тĕлĕшĕнчи мĕнпур оппозицилле элементсене *пулăшу пани* социал-демократсен пропагандинче ак çапла палăрмалла: абсолютизм рабочисен ĕçĕшĕн тăшман пулнине кăтартса парса, социал-демократсем, абсолютизм вăл—хăшпĕр ытти обществăллă группăсемшĕн те тăшман пулнине кăтартса парĕç, рабочи класăн çав группăсене *хăшпĕр ыйтусенче, хăшпĕр задачăсенче* юлташла пулăшасси çинчен кăтартса парĕç т. ыт. те. Агитацире вăл пулăшу çапла палăрмалла: социал-демократсем абсолютизмăн полицилле пусмăрĕ палăрнипе кашнинпех агитацире усă курмалла, çав пусмăр *пĕтĕмĕшпе* мĕнпур вырăс граждансем çине мĕнле тиеннине, чи йывăр пусмăрта пурăнакан сословисен, халăхсен, религисен, сектăсен т. ыт. представителĕсем çине мĕнле тиеннине, нимрен ытла çав пусмăр *рабочи класа* мĕнле йывăррăн пырса тивнине рабочисене кăтартса памалла. Юлашкинчен, практикăра çак пулăшу ак мĕнле пулать: хăшпĕр уйрăм тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес тесе, вырăс социал-демократсем урăх юхăмри революционерсемпе союз тума хатĕр, союз тума хатĕррине вара вĕсем ĕçре пĕрре çеç мар кăтартса панă.

Кунта эпир иккĕмĕш ыйту патне те пыратпăр. Хăшпĕр оппозицилле группăсем рабочисемпе юлташлă пулнине кăтартса парса, социал-демократсем яланах рабочисене уйрăм асра тытса тăрĕç, çав юлташлăхăн вăхăтлăх тата условнăй характерне яланах ăнлантарса парĕç, пролетариатăн класлă уйрăмлăхне, пролетариат хăйĕн паянхи союзникĕшĕн ыранхи кун противник пулса тăма пултарассине яланах астутарса тăрĕç. Пире çапла калĕç: „капла кăтартса пани хальхи вăхăтра политикăллă ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсене пурне те *вăйсăрлатĕ*“, тейĕç. Çапла кăтартса пани политикăллă ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсене пурне те *вăйлатĕ*,—тесе ответлĕпĕр эпир. Паллă, *классен* чăн-чăн интересĕсене *ăнланса илни* çине таянса кĕрешекенсем çеç вăйлă, çавăнпа та çав класлă интерессене, ку чухнехи обществăра халех ĕнтĕ пысăк вырăн йышăнса тăраканскерсене, шута илменни кĕрешекенсене вăйсăрлатĕ çеç. Ку вăл, пĕр енчен. Тепĕр енчен тата, абсолютизма хирĕç кĕрешнĕ чухне рабочи класăн хăйне уйрăм тытмалла, мĕншĕн тесен рабочи класс *çеç* абсолютизма хирĕç вĕçне çитиех хирĕç тăракан пĕртен пĕр иккĕленми вăй пулса тăрать; рабочи класпа абсолютизм хушшинче *çеç* ком-

промиссем пулма пултараймаççĕ, рабочи класс *çеç* пĕр сăмахсăрах, ним иккĕленмесĕрех, каялла çаварăнса пăхмасăрах, демократизмăн союзникĕ пулма пултарать. Мĕнпур ытти классенче, группăсенче, халăх сийĕсенче абсолютизма хирĕç тăшманла тăрасси пăркаланусăрах пулаймасть, вĕсен демократизмĕ яланах каялла çаварăна-çаварăна пăхать. Абсолютизм промышленноçлă тата обществăллă аталанăва чарса тăнине буржуази пĕлмесĕр тăма пултараймасть, анчах обществăллă тата политикăллă строя туллин демократизацилессинчен вăл хăрать, çавăнпа та вăл яланах пролетариата хирĕç абсолютизмпа союз тума пултарать. Вак буржуази, хăйĕн ăшчиккине пула икĕ питлĕ, вара пĕр енчен, пролетариатпа демократизм еннелле туртăнса, вăл, тепĕр енчен, реакциллĕ классем патне туртăнать, историе чарса тăма хăтланать, абсолютизмăн эксперименте, ултавне лекме пултарать (III Александр патшан „халăхла политика“ форми майлă та пулин), хăйĕн *вак собственникла* положенине çирĕплетес *тесе*, пролетариата хирĕç, пуçпулса тăракан классемпе союз тума пултарать. Вĕреннĕ çынсем, пĕтĕмĕшпе каласан, „интеллигенци“ абсолютизмăн полицейскиллĕ тискер пусмăрне хирĕç, ăс-шухăшпа ăслăлăха путлантараканскерне хирĕç тухмасăр тăма пултараймасть, анчах çак интеллигенцин материальнăй интересĕсем ăна абсолютизмпа, буржуазипе çывăх çыхăнтарса лартаççĕ, çавăнпа вăл ирĕксĕрех пăркаланать, компромиссем тăвать, хысна шалăвĕшĕн е тата услам е дивидент илес çĕре хутшăнассишĕн ирĕксĕрех хăйĕн оппозициллĕ, революциллĕ хастарлăхне сутать. Пусмăрти халăхсен тата хĕсĕрлĕх тӳссе пурăнакан тĕн вĕрентĕвĕсен демократиллĕ элеменчĕсене илес пулсан, акă мĕн кирек камшăн та паллă тата куç умĕнчех: халăхăн çавăн йышши сийĕсем хушшинчи класлă хирĕçӳсем пит те тарăн, пит те вăйлă, çавăн йышши халăхсен мĕнпур класĕсем абсолютизма хирĕç тата демократиллĕ учрежденисемшĕн кĕрешме пĕтĕçес юлташлăхран нумай тарăн, нумай вăйлă. Пролетариат çеç вĕçне çитиех тĕрĕс пыракан демократ, абсолютизмăн хаяр тăшманĕ пулма пултарать, нимĕнле уступка та, компромисс та тумасть,—вăл ĕнтĕ хăйĕн класлă положенине пула, урăхла пулма та пултараймасть. Пĕр пролетариат çеç политикăллă ирĕклĕхшĕн, демократиллĕ учрежденисемшĕн *малта пыракан кĕрешӳçĕ* пулма пултарать, мĕншĕн тесен: пĕрремĕшĕнчен, политикăллă пусмăра пролетариат пуринчен те ытларах тӳсет, вăл класс верховнăй власть патне пыма та, чиновниксем патне пыма та, обществăллă шухăш çине влияни пама та май çук пирки, унăн положенинче нимĕнле тӳрлетӳ те тупăнмасть. Иккĕмĕшĕнчен, политикăллă тата



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

обществăллă строя *вĕçне çити* демократизацилеме пролетариат çеç пултарать, мĕншĕн тесен ун пек демократизацилени çав строя рабочисен аллине панă пулĕччĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ рабочи класăн демократиллĕ ĕçне ытти классемпе группăсен демократизмĕпе *пĕрлештерни* демократиллĕ движение *вăйсăрлатнă* пулĕччĕ, политикăллă кĕрешĕве *вăйсăрлатнă* пулĕччĕ, кĕрешӳ хастарлăхне, çирĕплĕхне йăвашлатнă пулĕччĕ, компромисс çулĕ çинелле ытларах пăрса янă пулĕччĕ. Пачах урăхла, рабочи класа—демократиллĕ учрежденисемшĕн малти вырăнта кĕрешекен—туса *уйăрни* демократиллĕ движение *вăйлатĕ*, политикăллă ирĕклĕхшĕн кĕрешессине *вăйлатĕ*, мĕншĕн тесен рабочи класс ытти мĕнпур демократиллĕ тата политика тĕлĕшпе оппозициллĕ элементсене малалла *тĕртсе пырĕ*, либералсене политикăллă радикалсем патнелле тĕртсе пырĕ, радикалсене ку чухнехи обществăн пĕтĕм политикăллă тата социальнăй стройĕнчен татăклăнах сивĕнме тĕртсе пырĕ. Российăра *социалистсем пурте социал-демократсем* пулмалла тесе эпир çӳлте каларăмăр. Эпир халь çакна хушса калатпăр: Российăра чăн-чăн тата вĕçне çити тӳрĕ пыракан *демократсем пурте социал-демократсем* пулмалла.

Хамăр шухăша тĕслĕх илсе ăнлантарса парар. Чиновничествăн, бюрократин учрежденине, управлени тĕлĕшпе специализацилнĕ тата халăх умĕнче привилегиллĕ вырăна лартнă уйрăм çынсен сийне илер. Абсолютистла, çурмаазиатла Российăран пуçласа, культурăллă, ирĕклĕ, цивилизациллĕ Англие çитиех, пуринче те эпир буржуаллă обществăна кирлĕ орган пулса тăракан, çак учреждение куратпăр. Россия кая юлнине кура, унăн абсолютизмне кура, чиновниксем умĕнче халăх *пĕтĕмпех правасăр*, привилегиллĕ бюрократи *пĕтĕмпех* иртĕнсе пурăнать. Англире управление тĕрĕслемешкĕн халăхăн хăватлă контроль пур, анчах унта та çав контроль *тулли пуласси инçе*, унта та бюрократи сахал мар привилеги тытса усрать, халăхăн тарçи мар час-часах халăхăн господинĕ пулса тăрать. Англире те эпир акмĕн куратпăр: унта та вăйлă обществăллă группăсем бюрократин привилегиллĕ положенине пулăшса тăраççĕ, çав учреждение туллин демократизацилессине чăрмантараççĕ. Мĕншĕн вăл апла? Мĕншĕн тесен ăна *туллин* демократизацилени пĕр пролетариат интересĕшĕн çеç усăллă пулать: буржуазийĕн чи малта пыракан сийĕсем те чиновничествăн хăшпĕр привилегисене хӳтĕлеççĕ, пур чиновниксене те суйласа лартассине, ценза пĕтĕмпех пĕтерессине, чиновниксем халăх умĕнче тӳррĕмĕнех ответлă пулассине т. ыт. хирĕç тăраççĕ, мĕншĕн тесен ун пек тулли демокра-

тизаци пулнипе пролетариат буржуазие *хирĕç* кĕрешмешкĕн усă курассине çак сийсем сисеççĕ. Российăра та çавăн пекех. Вырăссен тем тума та пултаракан пысăк влаçлă, ответсăрлă, сутăнчăклă, тискер, харампырла тата тăмсай чиновничествине хирĕç вырăс халăхĕн пит те нумай йышлă тата пит те тĕрлĕ сийĕсене тăратнă. Анчах та, пролетариатсăр пуçне, çак сийсенчен *пĕри те* чиновничествăна пĕтĕмпех демократизацилеме парас çук, мĕншĕн тесен ытти сийсен пурин те (буржуазийĕн, вак буржуазийĕн, пĕтĕмĕшпе „интеллигенцин") вĕсене чиновничествăпа çывхартакан çыхăнусем пур, мĕншĕн тесен çак мĕнпур сийсем—вырăс чиновничествăн *хурăнташĕ*. Святой Руçра интеллигент-радикал, интеллигент-социалист император правительствин чиновникĕ пулса каясси,—канцеляри тытăмĕнчех „усă" кӳретĕп тесе хăйне лăплантаракан чиновник,—пушăпа нагайка правительстви умĕнче хăйĕн политикăпа интересленменнине, хăйĕн лакейлăхне çав „усă" паратăп тенĕ сăмахпа тӳрре тухма пăхакан чиновник пулса каясси мĕнле çăмăллăн пулнине кам пĕлмест-ха? *Пролетариат* çеç абсолютизмпа вырăс чиновничествине хирĕç татăклăнах тăрать, *пролетариатăн* çеç хăйне дворянла-буржуалла обществăн çак органĕсемпе çывхартакан нимле *çыхăнусем* те çук, пролетариат çеç вĕсене хирĕç ним килĕшми хирĕç тăма тата татăклăн кĕрешме пултарать.

Пролетариат, хăйĕн класлă кĕрешӳне социал-демократи ертсе пынипе тăваканскер, вырăс демократийĕн малти ретре кĕрешекенĕ пулса тăнине тĕплĕн çутатса панă чухне, эпир, вырăс социал-демократийĕ политикăллă ыйтусене тата политикăллă кĕрешĕве кайри вырăна чакарса хурать текен пит те сарăлнă, пит те тĕлĕнмелле шухăшсене тĕлпулатпăр. Эпир куратпăр ĕнтĕ, çак шухăшсем йăлтах чăнлăха хирĕç тăраççĕ. Социал-демократин принципĕсене нумай хутчен тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантара-ăнлантара панă, вырăссен социал-демократла малтанхи изданийĕсенчех — ютçĕршывсенче тухнă брошюрăсенче тата „Освобождение Труда"[17] группа кĕнекисенче ăнлантарса панă, çаксене çав тери тĕлĕнмеллех ăнланманни мĕнрен килет-ха? Пирĕн шутпа, çав тĕлĕнтерекен факта ак çак виçĕ обстоятельствăпа ăнлантарса пама пулать.

Пĕрремĕшĕнчен, кивĕ революциллĕ теорисен предствителĕсем, программăсене тата ĕç планĕсене çĕршывра мĕнпур чăнчăн классене, истори пĕр-пĕр паллă çыхăнусемпе хутшăнăва лартнăскерсене асра тытас никĕс çинче мар, абстрактлă идейăсен никĕсĕ çинче тума хăнăхнăскерсем, социал-демократизмăн принципĕсене тĕпренех ăнланмаççĕ. Шăпах, вырăс демократине пулăшса тăракан *интерессене* чăннипе сӳтсе-явман пирки çеç,

вырӑс социал-демократийӗ вырӑс революционерӗсен демократла задачисене шута илмест, текен шухӑш килсе тухма пултарнӑ та.

Иккӗмӗшӗнчен, ҫакна ӑнланмаҫҫӗ: экономикӑллӑ тата политикӑллӑ ыйтусене, социалистла тата демократла ӗҫе пӗр ҫӗре *пролетариатӑн* пӗрлӗхлӗ *класлӑ кӗрешӳне* пӗрлештерни, демократиллӗ движенипе политикӑллӑ кӗрешӗве вӑйсӑрлатмасть, вӑйлатать, ӑна халӑх массисен чӑн-чӑн интересӗсем патне ҫывхартса, политикӑллӑ ыйтусене „интеллигенцин тӑвӑр кабинечӗсенчен" урама, рабочисемпе ӗҫҫынни класӗсен хушшине туртса кӑларса, политикӑллӑ пусмӑрӑн абстрактлӑ идейисен вырӑнне, политикӑллӑ пусмӑрӑн пролетариата пуринчен ытларах нуша кӑтартакан чӑн-чӑн палӑрӑмӗсене, социал-демократие агитаци тумашкӑн никӗс пулса тӑракан палӑрӑмсене кӑларса тӑратса вӑйлатать. Вырӑс радикалне час-часах ҫапла туйӑнать: социал-демократ, малта пыракан рабочисене тӳрех, халех политикӑллӑ кӗрешӗве чӗнес вырӑнне, ун вырӑнне вӑл рабочи движени аталанӑвӗн задачи ҫине, пролетариатӑн класла кӗрешӳне организацилесси ҫине тӗллесе кӑтартать, — ҫапла вара, социал-демократ хӑйӗн демократизмӗнчен *каялла чакать,* политикӑллӑ кӗрешӗве кая сирсе хӑварать мӗн. Анчах кунта *каялла* чакни пур пулсан та, вӑл чакни — французсен: „il faut reculer pour mieux sauter!" (хытӑрах сиксе каяс тесен каялла чакас пулать) текен сӑмах евӗрлӗ ҫеҫ пулма пултарать.

Виҫҫӗмӗшӗнчен, уҫӑмсӑрлӑх ҫакӑнтан килет: „политикӑллӑ кӗрешӳ" тенине, пӗр енчен, народоволецпа народоправец, тепӗр енчен, социал-демократ тӗрлӗрен ӑнланаҫҫӗ. Социал-демократсем политикӑллӑ кӗрешӗве урӑхла ӑнланаҫҫӗ, вӗсем ӑна революцилле кивӗ теорисен представителӗсенчен *чылай анлӑрах* ӑнланаҫҫӗ. Ҫак ӗненме йывӑр пек туйӑнма пултаракан япалана 1895-мӗш ҫулхи декабрӗн 9-мӗшӗнчи „Летучий листок группы Народной Воли" 4-мӗш № — пит те уҫҫӑн кӑтартса парать. Ҫак издание, ку чухнехи народоволецсем хушшинче шухӑш пит те тарӑн, ӑнӑҫлӑ ӗҫленине кӑтартаканскерне, мӗнпур чӗререн ырласа, П. Л. Лавровӑн[18] „О программных вопросах" ятлӑ статьине (19—22 стр.) палӑртмасӑр хӑварма пултараймастпӑр; вӑл статья кивӗлле шухӑшлакан народоволецсем политикӑллӑ кӗрешӗве урӑхла ӑнланнине уҫҫӑн кӑтартса парать.*) „...Кунта, — тесе ҫырать П. Л. Лавров

*) П. Л. Лавров статьи, 4-мӗш №-те пичетленӗскер, П. Л. Лавровӑн „Материалсем" валли хатӗрленӗ пысӑк ҫырун „пайӗ" ҫеҫ. Кӑҫал ҫулла эпир (1897) ютҫӗршывра П. Л. Лавровӑн ҫырӑвӗ пӗтӗмӗшпех тата Плеханов отвечӗ пичетленсе тухни ҫинчен илтрӗмӗр, анчах эпир вӗсенчен нихӑшне те курма пулта-

народоволецсен программи социал-демократсен программи тĕлĕшпе мĕнле пăхни ҫинчен калană чух, — пĕр япала ҫеҫ пысăк вырăн йышăнать: абсолютизм вăхăтĕнче, абсолютизма хирĕҫ кĕрешекен революциллĕ парти организациленисĕрех, рабочисен вăйлă партине организацилеме пулать-и?" (21 стр., 2 йĕрке); ҫавăн пекех кăшт ҫӳлерехре (1-мĕш йĕрке) „... абсолютизм пуҫпулса тăнă чухне, ҫав вăхăтра абсолютизма хирĕҫ революциллĕ партине организацилемесĕр, вырăс рабочисен партине организацилеме пулать-и?" Ҫак уйрăмлăхсем, П. Л. Лавровшăн ҫавтери пысăк пек туйăнаканскерсем, пирĕншĕн вуҫех ăнланмалла мар. Мĕнле апла? „Абсолютизма хирĕҫ кĕрешекен революциллĕ партисĕр *пуҫне*, рабочи парти"?? Ара рабочи парти хăй революциллĕ парти мар-и вара? Вăл абсолютизма хирĕҫ пымасть-и вара? Ҫак тĕлĕнмелле япала ҫинчен П. Л. Лавров статьин ак ҫак вырăнĕ ăнлантарса парать: „Вырăссен рабочи партин организацине абсолютизм вăхăтĕнче унăн пĕтĕм йĕркисем тытăнса тăнă вăхăтрах тума тивет. Социал-демократсене, абсолютизма хирĕҫ политикăллă *заговор* *) организацилемесĕрех, ҫавăн пек *заговорăн* мĕнпур условийĕсене шута илсе организацилемесĕрех, ҫакна тума май килсен, вара, паллах, вĕсен политикăллă программи — вырăс социалисчĕсен тивĕҫлĕ программи пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен рабочисене ирĕке кăларасси рабочисен хăйсен вăйĕпех пурнăҫа кĕнĕ пулĕччĕ. Анчах вăл пуласси питех те иккĕлентерет, тен, пулаймасть те пулĕ". (21 стр. 1 йĕрке.) Акă ĕҫĕн тупсăмĕ мĕнре! Народоволецсемшĕн политикăллă кĕрешӳ тенĕ ăнлану политикăллă *заговор* тенĕ ăнланупа пĕр пекех! Народоволецсемпе социал-демократсен политикăллă кĕрешӳ тактикинчи тĕп уйрăмлăхне П. Л. Лавров ҫак сăмахсемпе чăннипех пит те уҫҫăн кăтартса пама пултарнине йышăнмаллах пулать. Бланкизм[19], заговор традицийĕсем народоволецсен пит те вăйлă, ҫавтери вăйлă, вара вĕсем политикăллă кĕрешĕве политикăллă заговор формисĕр пуҫне урăхла ăнланма та пултараймаҫҫĕ. Социал-демократсен шухăшĕсем ҫакăн пек ансăр мар; вĕсем заговорсене ĕненмеҫҫĕ; вĕсем ҫапла шутлаҫҫĕ: заговорсен вăхăчĕ тахҫанах иртнĕ, политикăллă кĕрешӳрен заговор туса хуни, пĕр енчен, кĕрешĕве ансăрлатни пулать, тепĕр енчен—кĕрешĕвĕн чи юрăхсăр меслечĕсене суйласа илни пулать. П. Л. Лавров сăмахĕсем, „вырăс

раймарăмăр. Ҫавăн пекех эпир „Летучий листок группы Народной Воли" 5-мĕш № тухнипе тухманни ҫинчен те пĕлместпĕр, вăл №-те редакци П. Л. Лавров сырăвĕ пирки редакци ячĕпе статья пичетлесе кăларма пулнăччĕ. 4-мĕш № 22 стр. 1 йĕрке, асăрхаттарнине пăхăр.

*) Курсив пирĕн.

социал-демокрачӗсемшӗн хӗвеланӑҫри ӗҫсем ним иккӗленми тӗслӗх пулса тӑраҫҫӗ" (21 стр. 1 йӗрке) тенисем, *полемикӑллӑ* хӑтланни ҫеҫ пулаҫҫӗ, чӑннипе вара вырӑс социал-демокрачӗсем нихӑҫан та пирӗн политикӑллӑ условисем ҫинчен манман, нихӑҫан та Россиӑра уҫҫӑнах рабочи парти тума май пур тесе ӗмӗтленмен, нихӑҫан та социализмшӑн кӗрешес задачӑна политикӑллӑ ирӗклӗхшӗн кӗрешес задачӑран уйӑрман, ҫакна кирек кам та ӑнланать. Анчах вӗсем, ҫак кӗрешӗве заговорщиксен мар, рабочи движени ҫине таянса тӑракан рабочи партин тумалла пулать, тесе яланах шутланӑ, халӗ те ҫаплах шутлаҫҫӗ. Вӗсем ҫапла шухӑшлаҫҫӗ: абсолютизма хирӗҫ заговор туса мар кӗрешмелле, пролетариата воспитани парса, дисциплинӑлантарса, организацилесе, рабочисем хушшинче абсолютизмӑн кирек мӗнле палӑрӑмне те питлекен, полицейски правительствӑн пур рыцарӗсене те намӑс юпи ҫумне ҫапса лартакан, правительствӑна ирӗксӗрех уступка тутаракан политикӑлла агитаци туса кӗрешмелле, теҫҫӗ. С.-Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" ятлӑ организацин ӗҫӗ шӑпах ҫавӑн пек мар-и вара? Ара ҫак организаци,— нимле заговор та тумасӑр, тата хӑйӗн вӑйне шӑпах социалистла тата демократла кӗрешӗве Петербургри пролетариатӑн пӗрлӗхлӗ уйӑрӑлми класла кӗрешӳ туса *пӗрлештернипе* илсе, рабочи движени ҫине таянса тӑракан пролетариатӑн класла кӗрешӳне, капитала хирӗҫ, тата абсолютистла правительствӑна хирӗҫ кӗрешӳне ертсе пыракан революцилле партин пуҫламӑшӗ пулса тӑмасть-и вара? „Союз" ӗҫӗ, вӑл кӗске пулин те, социал-демократи ертсе пынӑ пролетариат пысӑк вӑй пулса тӑнине кӑтартса памарӗ-и вара? Вӑл вӑя правительство ирӗксӗрех шута илет, ӑна уступкӑсем тума васкать. 1897 ҫулхи июнӗн 2-мӗшӗнчи [20] закон, ӑна пурнӑҫа кӗртме васкани тӗлӗшпе те, унӑн содержанийӗ тӗлӗшпе те хӑйӗн пӗлтерӗшне уҫҫӑнах кӑтартса парать, вӑл закон пролетариата ирӗксӗрех уступка туни пулнӑ, вырӑс халӑхӗн тӑшманӗнчен туртса илнӗ позици пулнӑ. Вӑл уступка ытла та сахал, позици питех те пӗчӗк, анчах та рабочи движенийӗн ҫав уступкӑна тутарма пултарнӑ организацийӗ те — анлӑшӗпе те, ҫирӗплӗхӗпе те, нумай вӑхӑт хушши пурӑннипе те, опыт е средство пуянлӑхӗпе те палӑрса тӑмасть: „Союз борьбы", пурте пӗлеҫҫӗ, 1895—96-мӗш ҫулта ҫеҫ пуҫланнӑ, вӑл гектографпа тата литографипе пичетлесе кӑларнӑ листовкӑсем урлӑ ҫеҫ хӑйӗн чӗнӗвӗсене рабочисем хушшине сарма пултарнӑ. Ҫакӑн пек организаци, сахалтан та Российӑри рабочи движенин шултӑра центрӗсене (С.-Петербург, М.-Владимир округӗсене, кӑнтӑрти округа

тата Одесса, Киев, Саратов пек пысăк хуласене т. ыт.) пĕрлештерекенскер, революциллĕ хаçат кăлараканскер, „Союз борьбы" С.-Петербургри рабочисем хушшинче курнă авторитет пекех, пысăк авторитетпа усă кураканскер, — çакăн пек организаци ку чухнехи Российăра пит те пысăк политикăллă фактор пулассине — правительство хăйĕн мĕнпур шалти тата тулашри политикине вăл фактора шутра тытмасăр тума пултарманнине йышăнмасăр тăма пулать-и? Пролетариатăн класла кĕрешӳне ертсе пырса, рабочисем хушшинче организаципе дисциплинăна аталантарса пырса, вĕсене хăйсен экономикăллă чи çывăх нушисене пĕтерес тесе кĕрешме тата капиталистсенчен пĕр позици хыççăн теприне туртса илме пулăшса пырса, рабочисене политикăллă воспитани парса, пĕрмаях, çине тăрсах, абсолютизма хирĕç кĕрешсе пырса, патшан кашни башибузукне, пролетариата полицейски правительствăн йывăр аллипе пусарса тăраканскерсене хăшкăлтарса, — çакăн пек организаци пĕр вăхăтрах пирĕн условисемпе майлашăннă рабочи парти организацийĕ те, абсолютизма хирĕç тăракан хăватлă революциллĕ парти те пулĕччĕ. Çак организаци абсолютизма татăклăнах амантма мĕнле средствăсемпе усă курасси çинчен малтанах калаçни, вăл, тĕслĕхрен, восстание е массăллă политикăллă стачкăна е тата атакăн урăх меслечĕсене юратарах парĕ-и, тесе малтанах калаçни, — вăл ыйтăва халь татса пани—пушă доктринерство пулнă пулĕччĕ. Вăл çакăн пек пулĕччĕ: çар пухиччен, ăна мобилизацилеччен, ăна противник çине походпа илсе кайиччен генералсем çар совечĕ туса irттерне пек пулĕччĕ. Пролетариат çарĕ социал-демократла çирĕп организаци ертсе пынипе пĕр пăрăнмасăрах хăйне экономика тата политика тĕлĕшпе ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ чухне, — ун чух вара çак çар хăех генералсене кĕрешӳ средствисемпе меслечĕсене кăтартса парĕ. Çавăн чух, çавăн чух çеç абсолютизма тĕппипех пĕтерсе хурассси çинчен пыракан ыйтăва татса пама пулать, мĕншĕн тесен ку ыйтăва татса парасси шăпах рабочи движени лару-тăрăвĕнчен, унăн анлăшĕнчен, движени хăй туса хатĕрленĕ кĕрешӳ меслечĕсенчен, движение ертсе пыракан революциллĕ организацин хастарлăхĕнчен, ытти общецăллă элементсем пролетариат çине тата абсолютизм çине мĕнле пăхнинчен, шалти тата тулашри политика условийĕсенчен килет, — пĕр сăмахпа каласан, пиншер условирен килет, вĕсене малтанах пĕлсе тăма май та çук, усси те çук.

Çавăнпа та П. Л. Лавровăн ак çак шухăшĕсем те питех те тĕрĕс мар:

„Вĕсене (социал-демократсене), кирек те мĕнле пулсан та,

капитала хирӗҫ кӗрешме рабочисен вӑйне пӗрлештерме кӑна мар, абсолютизма хирӗҫ кӗрешме революциллӗ уйрӑм ҫынсене тата группӑсене те пӗтӗҫтерме тӳр килсен, вара вырӑс социал-демокрачӗсем, хӑйсене хӑйсем темле ят парсан та, *тӗрӗссипе* (автор курсивӗ) хӑйсен противникӗсен, народоволецсен, программине йышӑнӗҫ. Община ҫине, Российӑри капитализм кунҫулӗ ҫине, экономикӑллӑ материализм ҫине мӗнле пӑхнинчи уйрӑмлӑх—вак япала, чӑн-чӑн ӗҫшӗн питех те пысӑк вырӑн йышӑнманскер тата уйрӑм задачӑсене, тӗп пунктсене хатӗрлемелли уйрӑм меслетсене татса пама пулӑшаканскерсем е кансӗрлекенскерсем ҫеҫ пулма пултараҫҫӗ, анчах—унтан кӑшт та ытла мар" (21 стр., 1 столб.).

Ҫак юлашки положение, вырӑс пурнӑҫӗн тата вырӑс обществи аталанӑвӗн тӗп ыйтӑвӗ ҫине, историе ӑнланассин тӗп ыйтӑвӗсем ҫине мӗнле пӑхнинчи уйрӑмлӑх имӗш „вак ӗҫсене" ҫеҫ тивме пултарать текен положение хирӗҫ тавлашни тӗлӗнмелле пулса тӑрать! Революциллӗ теорисӗр революциллӗ движени те пулма пултараймасть, тесе тахҫанах каланӑ ӗнтӗ, ҫавӑнпа та *хальхи вӑхӑтра* ҫакӑн пек чӑнлӑха ӗнентерсе пама кирлӗ те мар пулӗ. Класс кӗрешӗвӗн теорийӗ, вырӑс историне материалистла ӑнласси, Российӑн ку чухнехи экономикӑллӑ тата политикӑллӑ положенине материалистла хак парасси, пӗр-паллӑ класс ытти классем ҫине мӗнле пӑхнине тӗпчесе, революциллӗ кӗрешӗве ҫав класӑн пӗр-паллӑ интересӗсемпе ҫыхӑнтарма кирлине йышӑнасси—ҫак революциллӗ пит те пысӑк ыйтусене „вак ӗҫсем" тени,—калама ҫук пысӑк йӑнӑш пулать, тата революциллӗ *теори* ветеранӗнчен ҫакна ниепле те кӗтмелле мар, эпир вӑл вырӑна ҫавӑнпа та lapsus*) теме те хатӗр. Ҫырса илнӗ сӑмахсен малтанхи ҫур пайӗ пирки калас пулсан, вара унӑн тӗрӗсмарлӑхӗ тата та тӗлӗнмеллерех. Вырӑс социал-демокрачӗсем, революциллӗ уйрӑм ҫынсемпе группӑсене абсолютизма хирӗҫ кӗрешме пӗтӗҫтермесӗрех, капиталпа кӗрешме рабочисен вӑйне (урӑхла каласан, экономикӑллӑ кӗрешме ҫеҫ) пӗрлештереҫҫӗ кӑна, тесе пичетре калани — вӑл вара вырӑс социал-демокрачӗсен ӗҫӗсем ҫинчен пурне те паллӑ фактсене е пӗлменне, е пӗлес килменне кӑтартать. Е, тен, П. Л. Лавров Российӑра практикӑра ӗҫлекен социал-демократсене—„революциллӗ ҫынсем", „революциллӗ группӑсем" вырӑнне шутламасть пулӗ?! Е (ку, тӗрӗсрех пулать пулӗ) абсолютизма хирӗҫ „кӗрешни" тесе вӑл абсолютизма хирӗҫ заговор тунине ҫеҫ ӑнланать пуль? (21 стр., 2 столб. танлаш-

*)—ӑнсӑртран каласа яни. *Ред.*

тар: „...ĕç... революциллĕ *заговор* тăвасси çинчен пырать“ курсив пирĕн). Тен, П. Л. Лавров шухăшĕпе, политикăллă заговорсем туман çын политикăллă кĕрешӳ те туса пымасть пулĕ? Татах тепĕр хут калатпăр, çакăн пек шухăшлани ĕлĕкхи народовольчествăн кивĕ традицийĕпе шăпах килĕшсе тăрать, анчах политикăллă кĕрешӳ çинчен ку чухне шухăшланипе те, ку чухнехи чăнчăн ĕçсемпе те çав шухăш пачах та килĕшсе тăмасть.

Пирĕн тата пĕр-ик сăмах народоволецсем çинчен каламалла пулать. Пирĕн шутпа, П. Л. Лавров, социал-демократсем „народоволецсене уçăмлăрах тесе пĕлтереççĕ, çавăнпа та, вĕсемпе пĕрлешмесĕрех, вĕсене пулăшса тăма хатĕр“, (19 стр., 2 столб.) тесе йăлтах тĕрĕс калать; çапла хушса каламалла çеç пулнă: уçăмлăрах *демократсем* вырăнне хурса, тата народоволецсем вĕçне çитиех тӳрĕ демократсем пек тухнă *пирки*, темелле пулнă. Шел пулин те, çак услови—хальхи вăхăтра çук-ха, вăл малашне пулассине ĕмĕтленмелле кăна пулать. Народоволецсем демократиллĕ задачăсене народничествăран тата пĕтĕмĕшпе „вырăс социализмĕн“ кивелнĕ формисемпе çыхăнса тăрассинчен хăтарма кăмăл турĕç, анчах вĕсем хăйсем те кивĕ тĕшмĕшлĕхсенчен нумаях хăтăлса çитеймен пулнă, тата тӳрĕ çул-йĕртен катара тăнă, мĕншĕн тесен хăйсен политикăллă улăштарусемшĕн çеç тăракан партине вĕсем „социально (??!) - революциллĕ“ парти тесе ят пачĕç (вĕсен „Манифестне“, 1894-мĕш çулхи февраль 19-мĕшĕнче кăларнă тесе паллă тунăскерсене, пăхăр), хăйсен „Манифестĕнче“—„халăх прави тенĕ ăнланăва халăх производствине организацилесси кĕрет“ (цитатăсене пирĕн аса илнипе çеç илсе пама тивет), тесе каларĕç, çапла вара, вăрттăн çав народничество тĕшмĕшлĕхĕсенех кĕртсе хучĕç. Çавăнпа та, тен, П. Л. Лавров вĕсене „маскарад политикĕсем“ (20 стр. 2 столб.) тесе ят панипе ытлашши йăнăшах та тумасть пулĕ. Тен, народоправствăна куçса пыракан вĕрентӳ тесе хакласан тĕрĕсрех пулĕ, унăн çак ĕçĕсене хисепе хумасăр хăварма юрамасть: вăл народникла вĕрентĕвĕн хăйне евĕрлĕхĕнчен вăтаннă, вара народничествăн полицейскилле класлă абсолютизм умĕнче политикăллă улăштарусене мар, экономикăллă улăштарусене кăмăлласси çинчен калаçакан, ирсĕр реакционерĕсемпе уççăнах тавлашма тытăннă. (Народное Право парти кăларнă „Насущный вопрос“ ятлă брошюрăна пăхăр). Народоправецсен партийĕнче, социалистсем пулнăскерсенчен пуçне, хăйсен социалистла ялавне тактикăллă сăлтавсемпе пытараканскерсенчен пуçне, социалистсем-мар политиксен маскисене çеç тăхăнаканскерсенчен пуçне (П. Л. Лавров шутланă пек, 20 стр., 2 йĕрке) чăнахах урăх никам та çук пул-

сан,—вара, паллах, вăл партин нимле малашлăх та çук. Анчах çав партире маскарадла мар, социалист-мар чăн-чăн политиксем, социалист-мар демократсем пур пулсан,—вара вăл парти, пирĕн буржуазин политика тĕлĕшпе оппозициллĕ элеменчĕсемпе çывхарма тăрăшса, пирĕн вак буржуазин, вак сутăçсен, вак ремесленниксен т. ыттисен класĕн—Хĕвеланăç Европăри демократиллĕ движенире пур çĕрте те хăйĕн рольне кăтартнăскерĕн, пирĕн патра Российăра реформа хыççăнхи эпохăра уйрăмах культура тĕлĕшĕпе тата ытти тĕлĕшпе те çитĕнӳсем хăвăрт тунăскерĕн, шултăра заводчиксене, финанспа промышленноçри шултăра монополистсене ним именмесĕр пулăшакан полицейски правительствăн пусмăрне туймасăр тăма пултарайманскерĕн, политика тĕлĕшĕнчен хăйне-хăй ăнланса илессине чĕртсе ярса, сахал мар пулăшу пама пултарать. Çавна тăвас тесен, народоправецсен хăйсен умне шăпах халăхăн тĕрлĕ сийĕсемпе çывхарас задача кăна лартмалла, пĕр çав „интеллигенципех" çырлахмалла мар; массăсен чăн-чăн интересĕсенчен уйăрăлса çав интеллигенци вăйсăрланнине „Насущный вопрос" хăй те йышăнать. Çакна тăвас тесен, народоправецсен обществăри тĕрлĕ элеменчĕсене пĕрлештерес тата социализма политикăллă задачăсенчен пăрса ярас шухăша пăрахмалла, халăхăн буржуаллă сийĕсемпе çывхарма чăрмантаракан суя намăслăха пăрахмалла, урăхла каласан, вĕсен социалист-мар политиксен программи çинчен калаçмалла çеç мар, çав программа тăрăх ĕçлесе пымалла, обществăллă группăсемпе классем, халь социализм вĕсене пачах та кирлĕ мар пулин те, малалла кайнăçемĕн, абсолютизм пусмăрне тата политикăллă ирĕклĕх кирлине вăйлăрах та вăйлăрах туякан обществăллă группăсемпе классем хăйсен класлă ăнланăвне чĕртсе ярса, аталантармалла.

---

Вырăс социал-демократийĕ питĕ çамрăк-ха. Теориллĕ ыйтусем чи малти вырăнта тăнă чухнехи пуçламĕш тапхăртан вăл халь çеç тухать. Вăл хăйĕн практикăллă ĕçне халь çеç аталантарма тытăнать. Социал-демократла теорисемпе программăсене критиклес вырăнне, ытти *фракцисенчи* революционерсем, вырăс социал-демокрачĕсен *практикăллă ĕçне* критиклемелле, вăл ирĕксĕрех çапла пулмалла та. Çак асăннă критика теориллĕ критикăран пит те çивĕччĕн уйăрăлса тăнине йышăнмалла, вăл çавтери уйрăм тăрать—С.-П.—ри „Союз борьбы", имĕш, социал-демократла-мар организаци текен кулăшла халап шухăшласа кăларма та май тупăннă мĕн. Çавăн пек сăмах тухма пултарни хăех те ĕнтĕ социал-демократсем политикăллă кĕрешĕве йышăн-

маççĕ текен сарăлнă аййп тĕрĕс маррине кăтартса парать. Çакăн пек сăмах тухма пултарни хăех те ĕнтĕ социал-демократин теорийĕ ĕнентерме пултарайман нумай революционерсем, социал-демократин *практики* тăрăх ĕненме пуçланине кăтартса параççĕ.

Вырăс социал-демократийĕ умĕнче тата та пысăк, кăшт çеç пуçăннă ĕç тăрать. Вырăс рабочи класĕ вăранни, вăл пĕлӳ патне, пĕрлешӳ патне, социализм патне, хăйне эксплоатацилекенсене тата пусмăрлакансене хирĕç кĕрешме стихийлă туртăнни кунран кун уççăнрах та анлăрах палăрса пырать. Вырăс капитализмĕ юлашки вăхăтра тăвакан гигантла çитĕнӳсем рабочи движени пĕр чарăнмасăр сарăлса тата тарăнланса ӳссе пырасси çинчен калаççĕ. Хальхи вăхăтра эпир капиталистла циклăн промышленность „чечекленекен", суту-илӳ вăйлă пынă, фабрикăсем чарăна пĕлми ĕçленĕ, тата çумăр хыççăн кăмпасем шăтнă пекех, вĕçĕмсĕр çĕнĕ заводсем, çĕнĕ предприятисем, акционерлă обществăсем, чугун çул таврашсем т. ыт. те, т. ыт. те шăтса тухакан тапхăрта пурăнатпăр пулмалла. Промышленность çапла „чечекленнĕ" хыççăн пурпĕрех крах (чылай вăйлăскер) пулассине малтанах пĕлсе тăмашкăн пророк пулма та кирлĕ мар. Çавăн пек крах вак хуçасен массисене юхăнтарĕ, рабочисен массисене ĕçсĕр юлнисен ретне кăларса пăрахĕ, çапла вара, мĕнпур рабочисен массисем умĕнче социализмпа демократизмăн ыйтăвĕсене, кашни ăнланулла рабочи, кашни шухăшлама пултаракан рабочи умĕнче тахçанах тăраканскерсене, çивĕччĕн лартĕ. Вырăс социал-демокрачĕсен çак крах çитнĕ çĕре вырăс пролетариачĕ ытларах ăнланулла пултăр, ытларах пĕрлештĕр, вырăс рабочи класăн задачисене пĕлекен пултăр, халь питех те пысăк услам илекен тата убыткăсене яланах рабочисем çине йăвантарма тăрăшакан капиталистсен класне отпор памашкăн пултарулла пултăр,— вырăс рабочисене тата пĕтĕм вырăс халăхне алăсенчен те, урасенчен те çыхса тăлласа лартакан полицейски абсолютизма хирĕç, вырăс демократийĕ пуçне тăрса, татăклă çапăçăва кĕме хатĕр пултăр тесе тăрăшмалла.

Çапла ĕнтĕ, ĕçе тытăнар, юлташсем! Хаклă вăхăта сая ярас мар! Вăранакан пролетариатăн ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пырас тĕлĕшпе, рабочи движение организацилес тĕлĕшпе, революцилле группăсене тата вĕсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе, рабочисене пропагандисла тата агитацилле литература парса тăрас тĕлĕшпе, рабочисен Российăн пур кĕтессисенче те сапаланса тăракан кружокĕсемпе социал-демократла группăсене пĕрлĕхлĕ *социал-демократла* рабочи партие пĕрлештерес тĕлĕшпе вырăс социал-демокрачĕсен питех те нумай ĕçсем тумалла!

## «СОЮЗ БОРЬБЫ» ПЕТЕРБУРГРИ РАБОЧИСЕНЕ ТАТА СОЦИАЛИСТСЕНЕ ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Петербургри революционерсем йывӑр вӑхӑт пурӑнса иртте-реҫҫӗ. Нумай пулмасть шӑтса тухнӑ тата хӑйне ҫавтери вӑйлӑ палӑртнӑ рабочи движение пӗтерсе хума правительство хӑйӗн мӗн-пур вӑйне пухнӑ пекех туйӑнать. Арестсем нихӑҫанхинчен нумай пулаҫҫӗ, тӗрмесем ытлашшипех тулса ларнӑ. Интеллигентсене, арҫынсене те хӗрарӑмсене те тытаҫҫӗ, рабочисене тытаҫҫӗ те масси-массипе ссылкӑна яраҫҫӗ. Кашни кун тенӗ пекех, полицей-ски правительство, хӑйӗн тӑшманӗсем ҫине урса кайнипе тапӑнса, ҫӗнӗ те ҫӗнӗ тискерлӗхсем туни ҫинчен хыпарсем килеҫҫӗ. Пра-вительство вырӑс революциллӗ движенийӗн ҫӗнӗ юхӑмне ҫирӗп-ленме, ура ҫине тӑма парас мар тесе кӗрешес задача лартнӑ. Прокурорсемпе жандармсем, „Союз борьбы" группӑна аркатса тӑкрӑмӑр тесе, халех ӗнтӗ мухтанаҫҫӗ.

Ҫак мухтанчӑклӑх—суя. Темӗн тӗрлӗ хӗсӗрлеҫҫӗ пулин те, «Союз борьбы» чӗрӗ. Эпир пӗтӗм кӑмӑлпах ҫакна палӑртатпӑр: йышлӑ арестсем ӗнтӗ, рабочисем хушшинче тата интеллигент-социалистсем хушшинче агитацилемелли хӑватлӑ хӗҫпӑшал пул-са, хӑйӗн ӗҫне тӑваҫҫӗ, вилнӗ революционерсем вырӑнне вырӑс пролетариачӗшӗн пӗтӗм вырӑс халӑхӗшӗн кӗрешекенсен ретне ҫӗнӗ вӑйпа тухма хатӗр тӑракан ҫӗнӗ революционерсем ҫитӗнсе тӑраҫҫӗ. Жертвӑсемсӗр кӗрешӳ пулма пултараймасть, патша башибузукӗсем тискеррӗн хӗсӗрленине хирӗҫ эпир тӳлеккӗн ҫапла ответ паратпӑр: революционерсем пӗтрӗҫ—сывӑ пултӑр революци!

Хӗсӗрлессине вӑйлатнипе халиччен «Союз борьбы» группӑн уйрӑм ӗҫсене вӑхӑтлӑха вӑйсӑрлатма, агентсемпе агитаторсене вӑхӑтлӑха сахаллатма ҫеҫ пултарнӑ. Халь шӑпах ҫакӑн пек са-халланни сисӗнет, ҫавна пула, ирӗксӗрех мӗнпур ӑнлануллӑ ра-бочисене, мӗнпур интеллигентсене, хӑйсен вӑйне революциллӗ ӗҫе хурас текенсене, чӗнсе воззвани кӑларма тивет. «Союз борьбы» группӑна агентсем кирлӗ. Мӗнпур кружоксемпе мӗнпур

уйрӑм ҫынсем, революциллӗ ӗҫӗн кирек те мӗнле выранӗнче, пит те ансӑрринче пулин те ӗҫлес текенсем ун ҫинчен «Союз борьбы» группӑпа ҫыхӑнса тӑракансене пӗлтерччӗр. (Калӑпӑр, пӗрпӗр группа ун пек ҫынсене тупаймасан,—ун пек пулассине ӗненмеллех мар та,—вӑл ютҫӗршыври «Союз русских социал-демократов» урлӑ пӗлтерме пултарать). Работниксем тӗрлӗ йышши ӗҫе валли кирлӗ, революционерсем революциллӗ ӗҫӗн уйрӑм функцийӗсем тӗлӗшпе мӗн тери ҫирӗпрех специализациленеҫҫӗ, конспирациллӗ меслетсене тата хӑйсен ӗҫне пытарассине мӗн тери ҫирӗпрех шухӑшласа тума вӗренсе ҫитеҫҫӗ, пӗчӗк, курӑнман, вак ӗҫе мӗн тери хастарлӑн пикенсе тӑваҫҫӗ,—пӗтӗм ӗҫ те ҫавӑн чухлӗ шанчӑклӑрах пулӗ, революционерсене тупма та жандармсемпе шпионсене ҫавӑн чухлӗ йывӑртарах пулӗ. Правительствӑна хирӗҫле элементсен выранӗсене, хальхисене ҫеҫ мар, тата пулма пултараканӗсене те правительство малтанах хӑйӗн агенчӗсемпе тултарса лартнӑ. Революционерсене хӗсӗрлекен хӑйӗн тарҫисен ӗҫне правительство пӗрмаях сарса, тарӑнлатса, аталантарса пырать, ҫӗнӗ меслетсем шухӑшласа кӑларать, ҫӗнӗ провокаторсем лартать, арестленисене хӑратса, суя показанисем кӑларса тӑратса, суя алӑ пуснисем туса, суя запискӑсем ҫырса пӑрахса т. ыт. ҫавӑн пек майсемпе пусарма тӑрӑшать. Революциллӗ дисциплинӑна, организацие, конспирацие вӑйлатса аталантармасӑр правительствӑпа кӗрешме май ҫук. Конспираци вара чӑн малтанах уйрӑм кружоксемпе уйрӑм ҫынсене ӗҫӗн уйрӑм функцийӗсемпе специализациленме хушать, вӗсене пӗрлештерсе, ҫыхӑнтарса тӑрас роле «Союз борьбы» группа членӗсен пит те пӗчӗк тӗп чӑмӑрне кӑна пама хушать. Революциллӗ ӗҫӗн уйрӑм функцийӗсем вӗҫӗ-хӗррисӗр тӗрлӗрен пулаҫҫӗ: рабочисем умӗнче каланӑ чух, суд айӑплама *пултараймиɪ* калаҫма пӗлекен легальнӑй агитаторсем кирлӗ, *а* кӑна каласа, *в* и *с* урӑххисене калаттарма пӗлекенсем кирлӗ. Литература, листоксем сарса тӑракансем кирлӗ. Рабочисен кружокӗсемпе группиcене организацилекенсем кирлӗ. Мӗнпур фабрикӑсемпе заводсенчен те, пулниртнисем ҫинчен пурин ҫинчен те сведенисем парса тӑракан корреспондентсем кирлӗ. Шпионсемпе провокаторсене йӗрлесе тӑракан ҫынсем кирлӗ. Конспиративлӑ хваттерсем тӑвакан ҫынсем кирлӗ. Литературӑна пӗр алӑран теприне пама, порученисене пӗринчен теприне пӗлтерме, тӗрлӗрен ҫыхӑнусем тытма ҫынсем кирлӗ. Укҫа пухакансем кирлӗ. Интеллигенципе чиновничество хушшинче рабочисемпе, фабрикӑпа заводсенчи йӑлапа администрацине (полицине, фабрикӑри инспекцине т. ыт.) ҫыхӑнса тӑракан агентсем кирлӗ. Российӑри тата ытти ҫӗршыв-

сенчи тӗрлӗ хуласемпе ҫыхӑну тытса тӑма ҫынсем кирлӗ. Тӗрлӗ литературӑна ҫапса кӑлармалли тӗрлӗ мелсем тума ҫынсем кирлӗ. Литературӑна тата ытти япаласене сыхласа усрама ҫынсем кирлӗ т. ыт. т. ыт. Уйрӑм ҫын е уйрӑм группа хӑй ҫине илнӗ ӗҫ мӗнтери пӗчӗкрех, вакрах пулать,—ҫавӑн чухлӗ вӑл ӑна тӗплӗн шухӑшласа йӗркелесе яма пултарать, жандармсен сыхӑлӑхне тӗрлӗ майсемпе улталаса, вӗсене пӑтраштарса ярса, крах пуласран ытларах хӑтарса тӑма, конспирациллӗ мӗнпур вак япаласене сӳтсе-явма пултарать, ҫавӑн чухлӗ ӗҫ ӑнӑҫлӑхӗ шанчӑкларах революционера тата вӑл организаципе ҫыхӑнса тӑнине йӗрлесе тӑма полиципе жандармсене ҫавӑн чухлӗ йывӑртарах, ҫавӑн чухлӗ революциллӗ парти, ӗҫе сиен кӳмесӗрех, пӗтнӗ агентсемпе членсене ҫӑмӑллӑн улӑштарма пултарать. Эпир пӗлетпӗр, ҫакӑн пек специализаци—питех те йывӑр япала, йывӑр, мӗншӗн тесен вӑл ҫынран питех те ҫирӗп, питех те харсӑр пулма ыйтать, мӗнпур вӑя ӗҫе пама, халиччен курман-илтмен пек нумай пама, пӗрмайлӑ ӗҫе, юлташсемпе ҫыхӑну тытмасӑр тумалли ӗҫе, революционерӑн пӗтӗм пурнӑҫне кичем те ҫирӗп регламента пӑхӑнтаракан ӗҫе пама ыйтать. Ҫак условисене тытса пырса ҫеҫ революциллӗ практикӑн корифейӗсем Российӑра пит те пысӑк ӗҫсене темиҫе ҫул хушши пур енчен те хатӗрленсе пурнӑҫа кӗртме пултарнӑ, эпир, социал-демократсен харсӑрлӑх, иртнӗ сыпӑксенчи революционерсеннинчен кая пулмӗ тесе ҫирӗпрех ӗненетпӗр. Эпир сӗннӗ система тӑрӑх, нумай ҫынсене, хӑйсен вӑйне революциллӗ ӗҫе ярас тесе туртӑнакансене, хатӗрленӳ тапхӑрӗ,—«Союз борьбы» ӗҫлес текен ҫын е группа ҫинчен кирлӗ пек сведенисем пухнӑ чухнехи тата унӑн пултарулӑхне уйрӑм порученисем парса тӗрӗсленӗ чухнехи тапхӑр—пит те йывӑр пулассине те пӗлсе тӑратпӑр. Анчах та малтанласа ҫапла сӑнаса ирттермесӗр, кучуххехи Российӑра революциллӗ ӗҫ тума май килмест.

Хамӑрӑн ҫӗнӗ юлташсене ӗҫӗн ҫакӑн пек системине сӗнсе, эпир, пире нумай вӑхӑтри опыт ӗнентерсе панӑ положенисене каласа паратпӑр, революциллӗ ӗҫ ҫак система тытса пынӑ чухне ытларах ӑнӑҫлӑ пулма пултарассине ҫирӗп шанса тӑратпӑр.

## АСĂРХАТТАРНИСЕМ

1. *„Что делать"*—Ленинăн чи пысăк произведенийĕсенчен пĕри. Пуçласа ютçĕршывра 1902 ç. март уйăхĕнче пичетленсе тухнă, экономистсене тата марксизмăн ытти тăшманĕсене идея тĕлĕшпе аркатса тăкас ĕçре, пролетариат идеологине йĕркелес тата большевикла партине пуçарса ярас ĕçре пит пысăк выран йышăннă. „Что делать" кĕнекере кăтартса панă теориллĕ положенисем кайран большевикла партин идеологийĕн никĕсĕ пулса тăнă" (ВКП(б) историйĕ, кĕске курс, 47 стр.)—*3.*
2. *Экономизм*—рабочи движенинче 90-мĕш çулсен вĕçĕнче пулнă оппортунистла юхăм. Экономистсем революциллĕ марксизма хирĕç кĕрешнĕ, пролетариатăн хăйтĕллĕн политикăллă партине тăвассине, рабочи класс хăй тĕллĕн политикăллă кĕрешессине пăрахăç тума сĕннĕ. Экономистсем çапла шутланă: политикăллă кĕрешӳ—либераллă буржуази ĕçĕ, рабочисене илес пулсан, вĕсене хăйсен хуçисене хирĕç экономикăллă кĕрешни те çителĕклĕ тенĕ. Экономизм пуçлансанах, Ленин ăна—рабочи класс хушшинче буржуази влиянине саракан выранне хурса, ăна хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешнĕ.—*4.*
3. *Социалист-революционерсем*, е, кĕскен *эсерсем*—вакбуржуалла, марксизма хирĕçле парти—саланса кайнă народникла группăсенчен XX ĕмĕр пуçламăшĕнче пуçланса кайнă. Хăйĕн индивидуальнăй террора йышăнакан йăнăш та сиенлĕ тактикипе вăл рабочисемпе хресченсен революциллĕ активлăхне аталантарассине чăрмантарнă, вĕсем царизмпа капитализма хирĕç массăллăн кĕрешессине кансĕрленĕ. Эсерсем 1917 ç. Вăхăтлăх буржуаллă правительствăна активлăн пулăшнă, помещиксемпе капиталистсен интересĕсене хӳтĕленĕ. Октябрьти социализмлă Аслă революци çĕнтернĕ хыççăн вĕсем троцкистсемпе, бухаринецсемпе союз туса, совет влаçне хирĕç заговорсем тунă, революци çулпуçĕсене вĕлерме тăнă, белогвардеецсемпе тата интервентсемпе пĕрле Российăра помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрма хăтланнă.—*4.*
4. *„Искра"*—революциллĕ марксистсен пĕрремĕш пĕтĕм Российăри политикăллă хаçачĕ, ăна 1900 ç. Ленин ютçĕршывра кăларма пуçланă. Экономистсемпе тата ытти оппортунисемпе кĕрешнĕ çĕрте „Искра" программа, тактика тата пролетариатăн революциллĕ партине организацилес тĕлĕшĕнчи мĕнпур ыйтусемпе вĕçне çитиех çирĕппĕн марксистла çулйĕре тытса пынă. Çĕнĕ сăнарла парти тăвас ĕçре „Искра" ролĕ питех те пысăк пулнă.—*5.*
5. *„Революционная Россия"*—эсерсен партин органĕ—1900—1905 çç. тухса тăнă.—*5.*
6. *Житловский Х.* (Григорович)—народник, эсерсен партин теоретикĕсенчен пĕри.—*5.*
7. *„Освобождение"* 1902—1905 çç. ютçĕршывра либераллă буржуази кăларса тăнă журнал.—*5.*
8. *Струве П. Б.*—легальнăй марксист. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулсенчи легальнăй марксистла литературăра марксизма буржуаллă реформизм майлă пăснă, пролетариат диктатури çинчен калакан вĕрентĕве марксизмран кăларса пăрахса, ун выранне, классем килĕшсе пурăнмалла, текен идейăсем кăларса тăратнă. Кайран либерал, юлашкинчен белогвардеец пулса тăнă.—*6.*
9. *Бернштейнианство*—нимĕç оппортунисчĕ Эдуард Бернштейн ячĕпе çыхăнса тăракан оппортунистла юхăм. Бернштейн, Энгельс вилнĕ хыççăн,

90-мĕш çулсен вĕçĕнче марксизмăн революциллĕ положенийĕсене хирĕç тухнă, марксизмран революциллĕ содержанине кăларса ывăтма, пролетариатпа буржуазие çураçтарма, рабочи движение буржуази интересĕсемпе влиянине пăхăнтарма хăтланнă. Экономистсем, кайранрах меньшевиксем, бернштейнианствăна Россия условинче пурнăçлама хăтланнă.—*6.*

10. *„Две тактики социал-демократии в демократической революции*"—Ленинăн чи пысăкрах произведенийĕсенчен пĕри, 1905 ç. июльре Женевăра пичетленсе тухнă. Вăл кĕнеке меньшевиксен 1905 ç. революцири вакбуржуалла тактикине хирĕç пынă. Ленин çав кĕнекере „марксизма революцин çĕнĕ теорийĕпе пуянлатнă тата большевикла партин революциллĕ тактикин никĕсне хывнă, çак тактика пулăшнипе пирĕн çĕршыври пролетариат 1917 çулта капитализма çĕнтерчĕ" (ВКП(б) историйĕ. 92 стр.)—*8.*

11. *РСДРП виççĕмĕш съезчĕ* Ленин тата большевиксем пит пысăк хатĕрленĕ ĕçне туса ирттернине пула, Лондонра пĕрремĕш вырăс революцийĕ тапхăрĕнче 1905 ç. апрелĕн 12—17-мĕшĕ хушшинче пухăннă съезд пĕтĕмĕшпех большевикла съезд пулнă. Съездра партин чи шултра организацисен пурин представительсем те пулнă.—8.

12. *„Пролетарий"*—РСДРП тĕп органĕ, ютçĕршывра Ленин редакциленипе 1905 ç. май 27-мĕшĕнчен пуçласа ноябрь 25-мĕшчен тухса тăнă. Мĕнпурĕ 26 номер тухнă—*8.*

13. *„Народное право" парти*—Натансон, Аптекман т. ыт. народниксем 1893 ç. организациленĕ вакбуржуаллă интеллигенцин группи. Вăл хăйĕн „Манифестне" тата „Насущный вопрос" ятлă пĕр программăллă брошюра кăларнă. 1894 ç. полици аркатса тăкнă. Народоправецсенчен нумайăшĕ кайран эсерсен партине кĕнĕ.—*9.*

14. *„Народная воля"* группа 1891 ç. организациленнĕ. Вăл группăна М. Александров (Ольминский), Е. Александрова, Н. Мещеряков т. ыт. кĕнĕ. Унăн хăйĕн типографийĕ пулнă, брошюрăсемпе прокламацисем чылай кăларнă, „Рабочий сборник" та икĕ номер „Летучий листок" кăларнă. 1894 ç. çак группăна полици аркатса тăкнă. Унта хутшăннисенчен пĕр пайĕ социал-демократи енне куçнă.—*9.*

15. *„Работник"*—1896—1899 çç. ютçĕршывсенче „Освобождение труда" группа редакциленипе хутран-ситрен тухса тăнă сборник. Мĕнпурĕ виçĕ кĕнекепе 6 номер тухнă.—*9.*

16. *„Союз борьбы за освобождение рабочего класса"* организацие Петербургра 1895 ç. пуçарса янă. „Союз" пуçласа Петербургри рабочисен мĕнпур сапаланчăк марксистла кружокĕсене пĕр централизациленнĕ организацие пĕрлештернĕ. „Союз" Российăра чăн-чăн марксистла парти пуçламăшĕ пулнă.—*9.*

17. *„Освобождение труда" группа*—вырăссен пĕрремĕш социал-демократиллĕ организацийĕ, ăна 1883 ç. ютçĕршывра Г. Плеханов тунă. Вăл группăна Г. Плеханов, П. Аксельрод, В. Засулич, Л. Дейч тата В. Игнатов кĕнĕ. Группăн тава тивĕçлĕ ĕçĕ çак пулса тăрать: вăл Российăра марксизма сарас тĕлĕшпе, народниксен йăнăш та сиенлĕ шухăшĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе пит нумай ĕç тунă.—*19.*

18. *Лавров П. Л.* (1823—1900)—народниксен паллă теоретикĕ тата идеологĕ.—*20.*

19. *Бланкизм* — французсен революционер-социалисчĕ, Парижри рабочисен иртнĕ ĕмĕрхи йышлă восстанине хавхалантаракан тата унта хутшăнса ĕçлекен Огюсти Бланки ячĕпе çыхăнса тăракан политикăллă юхăм. „Бланкизм,—тесе çырнă Ленин,—этемлĕх тара кĕрĕшнĕ чуралăхран хăтăлассине класс кĕрешĕвĕ урлă мар, интеллигентсен пĕчĕк ушкăнĕн заговорĕ урлă пуласса кĕтет".—*21*

20. *1897 ç. июнĕн 2-мĕшĕнчи закон*—фабрикăсемпе заводсенче ĕçкунне $11^1/_2$ сехете çити чакарасси çинчен тата вырсарникун канасси çинчен кăларнă закон, ăна патша правительстви 1896. ç. çуркунне массăллă стачкăсем хĕснине пула йышăннă.—*22.*

---

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

10 k.

Цена 50 коп.

В. И. ЛЕНИН

ЗАДАЧИ РУССКИХ СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТОВ

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР
Чебоксары * 1941